1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

чăваш халăх хаçачĕ

ХЫПАР

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

145/25550/№ | Ытлари кун, 2010, утă (июль), 27 | Хакĕ ирĕклĕ | WWW.hypar.ru

● Чиркӳ çумĕпе юхакан шывра шӳтернĕ пушăтпа ĕçлеме çăмăл пулнă
ВУЛАКАН ЫЙТАТЬ, СĔНЕТ, АСĂРХАТТАРАТЬ

● ➡ 2 стр.

● Хамăр курман-илтменнине ăнланса илме, хак пама çав тери кăткăс
ТЫМАРТАН ХĂРТНИСЕМ

● ➡ 3 стр.

● Çыранăн пĕр пайĕ ишĕлсе анчĕ те эпир хăйне евĕр çак кăмакана асăрхарăмăр
АРХЕОЛОГĂН ÇИТĔНĔВĔ ĂНĂÇУРАН КИЛЕТ

● ➡ 4 стр.

"ХЫПАР" Издательство çурчĕн хаçачĕсен эрнери тиражĕ
84327 экземпляр

• *Хăрушсăрлăх*

Торф вырăнĕсем тĕлкĕшеççĕ

Гидрометцентр республика вăрманĕсенче пушар тухас хăрушлăх халех чакмасси пирки асăрхаттарать. Маларах синоптиксем утă уйăхĕн 28-мĕшĕнчен сывлăш температури чакасса тата, шăрăх кунсем çумăрлă çанталăкпа улшăнасса шантарнăччĕ. Халĕ вара çапла пуласси иккĕленӳллĕ.

Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи Тĕп управленийĕн чрезвычайлă лару-тăрусен сводки кунран кун çĕнелсех тăрать. Шăрăх çанталăк кăларса тăратакан йывăрлăхсем ЧР Çутçанталăк министерствине чăннипех те шухăшлаттараççĕ. Пушар хăрушлăхĕн тапхăрĕ пуçланнăранпа Шупашкар лесничествин вăрманĕсенче çулăм 35 хут тухнине шута илнĕ. Вăл 12,8 гектар лаптăка сăтăр кӳни паллă. Инкек шучĕпе тĕп хулана Улатăр кăшт кăна çитеймест – «хĕрлĕ автан» кунти 395,15 гектар çинче 33 хут алхаснă. Пĕтĕмпе вара хăрушлăх тапхăрĕ пуçланнăранпа республикăн вăрман фончĕн территорийĕнче вутçулăм хăйĕн вăйне 108 хут кăтартма ĕлкĕрнĕ, 570,24 гектара сиен кӳнĕ.

Чăваш Ене Мари Республикинчен Атăл уйăрать пулин те пирĕн регион утрав мар-çке – Шупашкар çийĕн тăтăш явăнакан сĕрĕм кӳршĕсен инкекне аса илтерсех тăрать. Çавăнпах ЧР Министрсен Кабинечĕ утă уйăхĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа вăрмансене ирĕккĕн кĕрсе çӳреме чарчĕ. Атăл леш енче пурăнакансен килĕсене лекес тесен паспорт кăтартмалла.

Сосновка çывăхĕнчи унчченхи «Чăваштоппромран» килет çунăк шăрши.

● ➡ 2 стр.

•*Пулăм*

Çĕрпӳсен сывлăх çурчĕ алăкне уçрĕ

Çĕрпӳ хулин хĕвел тухăç-кăнтăр енчи çĕнелсе-аталанса пыракан микрорайон хĕрринчи уçă лапамра çĕкленнĕ «Асамат» физкультурăпа спорт комплексĕ /ФСК/ аякран тинĕсри хумсене сирсе малалла талпăнакан карап пекех курăнать.

Çак сăнар ахальтен килмерĕ, мĕншĕн тесен тĕллевне çирĕп пурнăçлакан йывăрлăхсене парăнтарса хăй палăртни патне çитетех. Асăннă комплексăн никĕсне те тĕнчере экономика кризисĕ алхаснă вăхăтра хывнă. Вăл çакăн пек кĕске вăхăтрах çĕкленсе хулара тата ку тăрăхра пурăнакансене хапăл туса алăкĕсене яри уçасси чылайăшне иккĕлентернĕ.

– Юлашки тăвată çулта Чăваш Ен историйĕ спорт объекчĕсем çĕклессипе, стадионсем тăвассипе, халăх сывă пурнăç йĕркине ытларах кăмăллама пуçланипе палăрчĕ. Паян эпир акă республикăра хальхи пур ыйтăва та туллин тивĕçтерекен тепĕр, шучĕпе – çирĕм пĕрремĕш, физкультурăпа спорт комплексĕ уçатпăр, – терĕ Николай Федоров Президент Çĕрпӳсене савăнăçлă пулăмпа ăшшăн саламласа. – Хăй вăхăтĕнче çак самант çитессе, паян халăхпа уçакан пуриншĕн те пĕлтерĕшлĕ, кирлĕ объект хатĕр пуласса шухăшлама та пултарайман çынсене те ăнланатăп. Куратăр-и: сирĕн иккĕленĕве сирекен, хамăр ĕçлеме пултарнине, ĕмĕте пурнăçа кĕртнине çирĕплетекен тĕслĕх мар-и сирĕн «Асамат»?..

ФСК çурчĕ шалтан та, тултан та чăннипех пурин кăмăлне те каймалла: çуртăн пĕтĕмĕшле калăпăшĕ 3166,2 тăваткал метр. Зал футбол уйĕнчен те пысăкрах. Унпа тĕрлĕ тĕллевпе – тĕрлĕ ăмăрту-турнир ирттерме, культура мероприятийĕсем йĕркелеме тата ыт.те – усă курма пулать. 25 метрлă бассейна кирек кам та ăмсанĕ. Шывне Францире туса кăларнă агрегат сăнаса, улăштарса тăрĕ. Тренажер, ташă, аэробика залĕсем çынсене йышăнма хатĕр. ФСК ĕçченĕсем пĕлтернĕ тăрăх – кунта çӳрес, сывлăха çирĕплетес, ăсталăха ӳстерес текенсем тахçанах тĕрлĕ кружокпа секцисене çыраннă. Занятисем кĕçех пуçланаççĕ. Расписанипе килĕшӳллĕн ком-

ЧР ПА пресс-служби сайчĕн сăн ӳкерчĕкĕсем.

плекс иртен пуçласа каçченех ĕçлĕ. Спортсменсем хăйсен ăсталăхне ӳстернипе пĕрлех кунта инвалидсем те хăйсен сывлăхне çирĕплетме пултараççĕ. Тренерсемпе вĕрентекенсен штачĕ тулли. Вĕсем ушкăнпа та, уйрăммăн та ĕçлĕç.

«Асамат» комплексра никĕс хывнинчен пуçласа тăррине витиччене «Голицин» АХО строителĕсем ĕçленĕ. Унăн генеральнăй директорĕ Алексей Коротков каланă тăрăх – социаллă проекта пурнăçлама пĕтĕм тăкака çурмалла пайласа Пĕтĕм Раççейри «Пĕрлĕхлĕ Раççей» политика партийĕпе республикăн «2007-2010 çулсенче Чăваш Республикинче физкультурăпа спорт аталанăвĕ» тĕллевлĕ программипе уйăракан укçатенкĕпе усă курнă. Федераци бюджетĕнчен килекен пурлăх спорт оборудованийĕ туянма, çурт кăшкарне тунă чухне сэндвич-панельсене, тимĕр конструкцисене кӳрсе килсе вырнаçтарма, монтаж тума кайнă. Район та хăйĕн тӳпине хывнă. Иртнĕ çул кăна 70,11 млн тенкĕлĕх ĕç тунă, пĕтĕм ĕçе вĕçлесе комплекса хута яма кăçал тата 45 млн тенкĕ куçарнă. Унпа пĕтĕмпех тĕллевлĕ усă курнă.

Президент пушă алăпа килмен: «Асамат» комплекса «Газель» çăмăл машина парнелерĕ. Аякри ялсенчен килекен çынсене турттарма. Ара, вĕсен те, ыттисем пекех, паянхи пурнăç ырлăхĕпе киленес килет-çке. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнасси ялта та çирĕпленсе пырать вĕт.

Салам сăмахĕсем хыççăн пурте ФСКпа тĕплĕн паллашрĕç.

■ **Юрий ЛИСТОПАД**

Саламлатпăр

Чăваш Республикин Президенчĕн 2010 çулхи утă уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 90-мĕш Указĕпе килĕшӳллĕн ял хуçалăхĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Шупашкар районĕнчи «Агарикус» АУП генеральнăй директорне **Александр Иванович ВЛАДИМИРОВА,** Йĕпреç районĕнчи «Красный партизан» колхозăн автомобиль водительне **Аркадий Сергеевич НИКОЛАЕВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ЯЛ ХУÇАЛĂХĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă.

КУН хыççăн КУН
☎ 56-04-26

Шăрăхра та юн параççĕ

Патăрьеленчи тĕп больницăра Донор кунне ирттернĕ. Ыр кăмăллăх акцине пурĕ 110 донор хутшăннă. 44 литр юн панă.

Яланхиллех больницăн тĕп тухтăрĕ Николай Тинюков, Владимир Мулендеев, Алексей Казачков шăл тухтăрĕсем, Валентина Васильева акушер-гинеколог, Хирти Пикшикри Р.Каштанов тухтăр хастарлăхпа палăрнă.

Ыхра Çырми ял тăрăхĕнче пурăнакансем те пуçаруллă пулнă.

Н.СЕМЕНОВ.

Пĕвесемпе çăлсем пулăшу кĕтеççĕ

Республикăра чылай çĕрте типнĕ пĕвесене тасатаççĕ. Хĕрлĕ Чутайĕнчи Ишеккассипе Тумликассисем те сăваплă ĕçе пуçăннă. Вĕсем пĕр пĕвене тасатнă ĕнтĕ. Тата иккĕшне çак кунсенче тирпейлĕç.

«Алтнă хыççăн тухнă тăпрана ял çыннисемпе пухăнса тикĕслесшĕн. Шыв тавра илем кĕртесшĕн. Çыран хĕррипе çатан карта тытсан аван пулмалла», – тет çак ĕç йĕркелӳçи район Пухăвĕн депутачĕ Александр Степанов.

Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимешре, Тăрмăшра пурăнакансем те ыттисемшĕн тĕслĕх вырăнĕнче. Çырма-çатрана тирпейлеме тухнă: кĕленче савăтсене, тимĕр-тăмăра пуçтарнă. Тăрмăшра ăпăр-тапăрпа хупланнă çăл та çĕнĕрен тапма пуçланă.

С.ЕРМАКОВА.

«ГАЗель» çул айккине чăмнă

Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕ Етĕрне районĕнче ĕнер çул çинчи инкекре 9 çын суранланнине пĕлтерет. Хĕрлĕ Чутай–Шупашкар автотрассăпа пынă «ГАЗель» ирхине, 10 сехетре, Анат Мучар çывăхĕнче çул айккине чăмнă. Тĕп хулана каякан микроавтобус салонĕнче 11 çын пулнă.

Инкек пирки çăлав службине иртсе каякан водительсем пĕлтернĕ. Вырăнти пушар хуралĕн специалисчĕсем аварии пулнă вырăна хăвăрт çитнĕ. Медиксен пулăшăвĕ 9-шне кирлĕ пулнă, вĕсенчен 2-шĕ – ачасем. Пурне те Етĕрнери тĕп больницăна илсе çитернĕ. Автоавари сăлтавне республикăн Çул çӳрев хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕнче тĕпчеççĕ.

Т.ВЫШИНСКАЯ.

Хĕç-пăшалпа усă курнăшăн

Çĕнĕ Шупашкар хула сучĕ Константин Дубов тĕлĕшпе пуçарнă уголовнăй ĕçпе приговор йышăннă. 1970 çулта çуралнă арçынна РФ Уголовнăй кодексĕн икĕ статйипе – хĕç-пăшалпа усă курса хулиганла ĕçсем тунăшăн тата çын сывлăхне сиен кӳнĕшĕн – айăпланă.

К.Дубов пĕлтĕрхи раштав уйăхĕнче урамра тĕл пулнă палламан арçынпа çапăçса кайнă, ăна тата унăн йыттине пневматика пистолетĕнчен икĕ хутчен пенĕ. Анчах суд ларăвĕнче айăплавпа килĕшмен. Пулни-иртнине çапла ăнлантарнă: йытта вăл хăйне хӳтĕлесе пенĕ имĕш. Çавăншăн хуçипе вăрçăнса кайнă.

Прокурор К.Дубовăн хулиганла ĕçĕсене уçса паракан факт çителĕклех тупса палăртнă. Суд унăн айăпне çирĕплетнĕ, çулталăк çурă условнăй майпа ирĕклĕхсĕр хăварма йышăннă.

И.ПЕТРОВ.

Çанталăк çинчен

Паян пирĕн республикăра шăрăх çанталăк пулать. Çил хĕвел тухăçĕнчен çеккунтра 1 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 36, çĕрле 19 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 752 мм, сывлăшри нӳрĕк 20 процент.

Кун тăршшĕ 16 сехет те 20 минут.

Ыран уяр çанталăк пулать. Çил хĕвел тухăçĕнчен çеккунтра 1 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 38, çĕрле 26 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 750 мм, сывлăшри нӳрĕк 17 процент.

Кун тăршшĕ 16 сехет те 17 минут.

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

ЯПАЛАН ЙĔРКИ, ÇĂПАТАН КАНТРИ ПУР

Чăваш халăх пурнăçĕнче ал ĕç тăвасси самай пысăк вырăн йышăннă. Йывăçран, хăва авса савăт-сапа, сĕтел-пукан ăсталасси анлă сарăлнă. Музее кайсан алтăрпа сăра куркисене, çӳпçепе арчана е тата ытти япалана сăнăр-ха. Тĕрлĕ эреш пуянлăхĕпе, илемлĕхĕпе палăрса тăраççĕ вĕсем. Тăмран ăсталанă чӳлмекпе кăкшăмра та, шăхличре те, ахăртнех, хăйне майлă вăрттăнлăх упранать. Музыка инструменчĕсене тума та хăйне май асамлă вăй кирлĕ пулнах ĕнтĕ. Паллах, йывăç-каскана, вырăх тирне, ытти япалана «чун кĕртсе» илемлĕ кĕвĕ калаттарасси пуриншĕн те шăл çемми пулман. Ахăртнех, çак ăсталăх аслашшĕнчен ывăлне, унтан мăнукне куçса пынă.

Халăх тумĕн те пĕлтерĕшĕ пысăк. Ĕлĕк шăрçапа, кĕмĕл укçа-тенкĕпе илемлетнĕ çи-пуç чăваш пикин, хĕрарăмĕн пуянлăхне кăтартнă.

Тĕрĕ тĕрлесси, пир тĕртесси те хăйне май кăткăс та пархатарлă, кăсăклă шутланнă. Авалхи ăстасем хăйсен тĕррисенче юрă хывнă. Ĕлĕкхи эрешсене халăх кунçулĕ, çын шăпи пирки каласа паракан çул çырав теме те пулать.

Шел те, паян ĕлĕкхи япаласемпе пачах та усă курмаççĕ, кил-çуртра та сыхланса юлман вĕсем. Çапах та чăваш тĕрри манăçа тухманни савăнтарать-ха. Юлашки вăхăтра пушшех те час-часах тĕл пулатпăр ăна. Кĕсье телефонĕн енчĕкĕсем, сумкăсем, сăмса тутрисем, чӳрече каррисем, сĕтел çи виттисем çинче тата ытти çĕрте те куратпăр. Ытларах, паллах, чăваш эстрада юрăçисем тăхăнакан çи-пуç çинче. Илемлĕ вун-вун тĕрлĕ эрешлĕ костюмсемпе тухаççĕ вĕсем халăх умне. Йăлтăркка пурçăнран çĕленĕ кĕпесем çинче чăваш тĕррисем тата чаплăрах курăнаççĕ. Артист мар, пукане тейĕн.

Çамрăксем паян чăвашлăха, чăваш тĕррине, эрешне манманни, ăна халăх умне кăларни çав тери пархатарлă. Пултарулăх çулĕ çине тин çеç тăнă яшсемпе хĕрсем /вĕсен хушшинче студент та чылай/ укçи-тенкине шеллемесĕр, тен, тепĕр чухне, тутлă çиес, чаплă тăхăнас вырăнне сцена костюмĕсем çĕлеттереççĕ. Ӳстерсе сăмахламастăп, паллакан пĕр юрăç каланă тăрăх, нумаях пулмасть вăл 12 пин тенкĕлĕх тĕрĕллĕ чăваш кĕпи çĕлеттернĕ, унăн юлташĕ вара – 25 пин тенкĕлĕх /!/. Çапла çав, халăх кăмăлне каяс, паллă артист пулас тесен паян талант çеç çителĕксĕр, укçана та хĕрхенмелле мар.

Юрĕ, сăмахăм укçа-тенкĕ пирки мар-ха. Пачах урăххи канăç памасть. Паян чăваш çи-пуçне, эрешĕсене е тата ытти япалана час-часах тĕл пулатпăр терĕмĕр. Туристсем валли те çителĕклех вĕсем. Анчах çак япаласемпе, ытларах чухне тĕрĕсемпе, пĕлсе те кирлĕ пек усă куратпăр-и-ха? Нумаях пулмасть Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Çемье вулавĕн центрĕнчи «Тĕрĕ тĕнчи» клубра ЧНК çумĕнчи ал ĕç ăстисен ассоциацийĕн председателĕ Зинаида Воронова халăх искусствин йăли-йĕркине сыхласа хăварас ыйтупа калаçу, çавăн пекех ĕлĕкхи чăвашсен хушпăвĕпе тухйине, пуçа тăхăнмалли ытти япала хатĕрлессипе мастер-класс ирттернĕччĕ. Ун чухне вăл шăпах çак ыйтăва хускатнăччĕ те. «Юлашки вăхăтра хĕр-упраçпа яш-кĕрĕм ĕлĕкхи тумпа кăсăкланма пуçлани савăнтарать, анчах тепĕр чухне чăваш тĕррине ытлашшипех илемлетнине куратăп», – тенĕччĕ. Чăннипех те /илемлĕ курăнтăр тесе-ха ĕнтĕ/ хăшпĕр ăста кирлĕ мар эреш хушса хурать е куçа йăмăхтаракан тĕспе усă курать. Çавна пула илемлĕх, тарăн шухăшлăх пачах çухалать. Çакă çи-пуçа тĕпренех пăсать.

Ăста юлашки вăхăтра артистсем тăваткаллă пиçиххи çыхма пуçланине те палăртнăччĕ. Чăвашсен çак йăла ĕмĕрне те пулман. Ăна Турцирен илсе килсе сутаççĕ имĕш. Лешсем вара илемлĕ тесе шухăшламасăрах усă кураççĕ.

Тепĕр чухне тата анатри чăвашсен хушпăвне тăханнине, турисен сурпанне çакнине курма пулать. Ку килĕшӳллĕ мар паллах. Çакна чăн малтанах пултарулăх ушкăнĕсен ертӳçисен, искусствоведсен сăнаса тăмалла. «Пăтăпа шӳрпе» пĕр хуранта пулни килĕшӳсĕр иккенне пурте пĕлетпĕр. «Эпир пурте чăвашсем-çке. Мĕнле тăханни çавах мар-и?» – текенсем те çук мар. Анчах япалан йĕрки, çăпатан кантри пур-çке. Çакна манар мар: чăвашсем мĕн авалтанах пĕр-пĕринчен чĕлхе, çи-пуç, йăла-йĕрке енĕпе уйрăлса тăраççĕ. Çапла майпа анатри, тури тата анат енчи /хутăш/ чăвашсем пулса кайнă та. Сăмахран, анатрисен çи-пуçĕ çинчи тĕрĕсем шултра та çутă тĕслĕ, турисен вĕтĕ те тĕттĕм тĕслĕ тĕрĕсемпе усă кураççĕ.

Чăваш çи-пуçне ытлашшипех «илемлетеççĕ» тенĕрен – нумаях пулмасть пĕр концертра тĕлĕнме тӳр килнĕччĕ. Сцена çине тухăçри ташăçăсен тумĕ манерлĕ çĕлеттернĕ çи-пуçпа хĕрсен пĕр ушкăнĕ тухрĕ /вăл мĕнлерех иккенне хăварах пĕлетĕр/. Ку нимĕн те марччĕ-ха, анчах костюмсене чăваш эрешĕпе, тĕррисемпе илемлетни аякран çав тери килĕшӳсĕр курăнчĕ. Çапла хăтланни чăваш çи-пуçĕнчен кулни пулмасть-и вара? Тен, культура çыннисем хамăрăн историе, культурăна пĕлменни, ăнланманни ку?

Паян пурнăç космос хăвăртлăхĕпе аталаннă май пирĕн те унпа тан пымаллине хирĕçлеместĕп. Çапах та авалтан пыракан йăла-йĕркене ытлашшипех çĕнĕлĕх кĕртсе пăсса хурас марчĕ.

■ **Татьяна КРАСНОВА**

• Лару

Тавçăрулли çăлăнăç майне тупатех

ЧР агропромышленноç комплексĕн ыйтăвĕсемпе ĕçлекен Правительство комиссийĕ Ял хуçалăх министерствин коллегийĕпе пĕрле черетлĕ ларăва Вăрмар районĕнче ирттерчĕ.

Ĕçлĕ тĕл пулу «Павлов» хресчен-фермер хуçалăхĕнче /ХФХ/ пуçланчĕ. Асфальт çул хĕррипе ыраш пусси инçете тăсăлать. Шăрăх уя çурса-йĕрлесе пысăк инкек кӳнĕ. Шел, мĕнле культура çитĕннине никам та уçăмлăн калаймарĕ. Ыраш çӳллĕшĕ шит тăршшĕ çеç, пучах вăрăмăшĕ – 1-2 сантиметр. Ача чухне çитĕннисем пасартан е ярмăрккаран: «Ыраш кăçал тем çӳллĕш, лаша пĕкки курăнмасть», – тесе юрласа таврăннине аса илтĕм те чун хурланса килчĕ. Ку ӳкерчĕке эпĕ ĕмĕрне те манас çук. Тĕшĕлесе пăхрăм – пучахран 2-3 пĕрчĕ тухрĕ. Ыраша тин палласа илтĕм. Мĕн тăвăн, çанталăкран иртеймĕн. Çӳлтен памасан нимĕн те тăваймăн. Пысăк лаптăка шăварса çитереймĕн.

Ыраша иртнĕ çулсенче кашни гектартан вăтамран 25-30 центнер пухса илнĕ. Пĕлтĕр никĕс хывнă чухне кăçал та çаплах пуласса шаннă. Тырă сутса лизингпа, парăмсемпе татăлма ĕмĕтленнĕ. Шел, халĕ çапла шутлама май килмест. Лаптăка сухаласа пăрахасси çеç юлать. «Çур аки валли çĕр хатĕрлемелле. Вырсан нимĕн те тухас çук. Тăкакĕ – ГСМ, ĕç укçи, техникăна асаплантарни... ытлашшипех», – терĕ «Павлов» пуçлăхĕ В.Павлов. Çапах та сухаличчен, тен, халăх çавапа е косилкăпа мĕн пуррине çулса илĕ? Йывăр çул ял çыннине кăштах пулăшу пултăр. Хăйне ырă тунине вăл нихăçан та манмĕ.

– Сивве, шăрăха тӳсекен сорт тупма май çук-ши?

– Ку ыйтăва мана мар, ăсчах-селекционерсене памаллаччĕ, – терĕ Вячеслав Павлов. – Малашне вĕсем кун пирки шухăшласа пăхасса шанас килет.

Ларура тĕп ыйтупа ЧР ял хуçалăх министрĕн çумĕ Сергей Павлов вырма ĕçĕпе тата выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма епле хатĕрленипе паллаштарчĕ.

Чăвашстат пĕлтернĕ тăрăх, 2010 çулăн пĕрремĕш çурринче мĕн пур тытăмри ял хуçалăх пĕрлешĕвĕсем 6,4 млрд тенкĕлĕх продукци туса илнĕ. АПКна федераципе республика бюджечĕсенчен пĕрле 558,3 млн тенкĕлĕх /пĕлтĕрхи çак тапхарти 72%/ пулăшнă.

Кăçал ял хуçалăх культурисене 582,8 пин гектар акнă тата лартнă /пĕлтĕрхинчен 2,4% сахалрах/. Шăрăхпа 127,8 пин гектар /50,2%/ пĕтнĕ.

Тĕллев – çурла уйăхĕн 15-мĕшĕччен вырмана вĕçлемелле, кĕр тыррисем акмалли плана пурнăçламалла, выльăх апатне мĕн пур таран çителĕклĕ хатĕрлеме тăрăшмалла, усă курман çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртмелле, çитес çулхи тухăçшăн вăрлăх палăртнинчен кая мар хывмалла, выльăх-чĕрлĕхе шăварассине, çаран çине ирпе каç кăларассине, витесемпе комплекссенче температурăна чакарассине йĕркелемелле...

ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ Михаил Игнатьев республикăри ял хуçалăх предприятийĕсен лару-тăрăвĕ пирки çапла каларĕ:

– Механизаторсене кăнтăрла канма, каçхине ĕçлеме ирĕк патăмăр. Тырă уйран типĕ килет. Халăха тӳрех сутма юрать. Çынсен кăмăлĕ лайăх, хирте мĕн пуррине йăлтах пуçтарасшăн.

Кризис малалла пынă, çанталăк йĕркерен тухнă çул ял хуçалăхĕ патшалăх пулăшăвĕсĕр аталанаймастех. Федераци шайĕпе калаçусем малалла пыраççĕ. Н.В.Федоров Президент Министрсен Кабинетне, Финанс министерствине республика бюджетне 150-300 млн тенкĕ ӳстерме сĕнӳ пачĕ.

Ял хуçалăхĕнче тавар туса илекенсене каялла тавăрса памалла мар пулăшас, кредит илнисене килĕшӳ вăхăтне виçĕ çулччен, лизингпа техника илнĕшĕн парăма тавăрса парас вăхăта 2 çулччен тăсас тĕллевпе калаçусем малалла пыраççĕ. Унсăрăн ял хуçалăх пĕрлешĕвĕсем пурте панкрута тухнă пулĕччĕç. Вĕсене сыхласа хăварма, малалла аталанма пулăшмалла.

Раççей Федерацийĕнче тырпула 17 процент çеç страхланă, пирĕн республикăра – 60. Чăваш Енĕн пулăшу илме шанчăк пысăкрах.

Ларура Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай районĕсен администрацийĕсен ял хуçалăх пайĕсен пуçлăхĕсене сăмах пачĕç. Юрий Петровпа Николай Коробков паян вырма, выльăх апачĕ хатĕрлесси епле пынипе паллаштарчĕç. Вĕсен хуравĕ Михаил Васильевича туллин тивĕçтермерĕ.

– Эсĕ хăвна шанмастăн-и? Туянатăн-и кĕрхи тулă вăрлăхне? – çирĕппĕн ыйтрĕ министр Юрий Даниловичран.

Николай Федоровичăн та вăрлăх тĕлĕшпе лару-тăру йывăр. Туянма хуçалăхсен укçа çитмест.

Михаил Игнатьев хăшĕ-пĕри тип-шарта та çухалса кайманнине çул çинче курнă тĕслĕхпе çирĕплетрĕ. Тавçăрулли çăлăнăç майне тупатех. Геннадий Ямуков фермерăн тыррисем аптрамаççĕ, куçа савăнтараççĕ. Пысăках мар темиçе кӳлĕ асăрхарăмăр. Самаях ăшăхланнă. Пĕрин патĕнче бульдозер тăрмашать. Çитес çул кунта шыв управĕ тарăн пуласси халех паллă.

Геннадий Николаевич кăçал 260 гектар çĕр улми лартнă. Икĕ уйне, 35-шер гектарлине, черетпе шăварать. Юнашарах – Энĕш шывĕ.

– Çĕр улми валли 18-20 градус ăшă кирлĕ, – аса илтерчĕ Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн ректорĕ Николай Кириллов.

Ирĕн-каçăн пĕрхĕнекен шыв хăйне евĕр микроклимат тăвать, тăпра температурине чакарать. Ректор шутласа пăхнă тăрăх – ку лаптăксенче кашни гектартан вăтамран 300 центнера яхăн çĕр улми тухмалла.

– Фермер нимĕн те çухатмасть. Кăçал та тупăш илетех, – çирĕплетрĕ Михаил Игнатьев министр.

Ларура хăшне-пĕрне РФ Ял хуçалăх министерствин Тав хучĕпе чысларĕç. Маттуррисен йышĕнче Геннадий Ямуков та пулчĕ.

Тырă хакĕ пирки. Ял хуçалăх министрĕн çумĕ Светлана Енилина пĕлтернĕ тăрăх – 3-мĕш класлă пĕр тонна тулă 3900 тенкĕрен – 5200, 4-мĕш класли 3500 тенкĕрен 5050 тенке çити хакланать.

– Хĕл каçмалăх çитĕ-ши?

– Çĕр-шывăн 24 млн тонна саппас пур. Интервенци фончĕ 9,5 млн тонна уйăрать. Çитмелле, – пĕлтерчĕ М.В.Игнатьев. – Республика 120 пин тонна фураж, 55 пин тонна апат-çимĕçлĕх тырă туянма палăртать.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

Торф вырăнĕсем тĕлкĕшеççĕ

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Кунти торф хирĕсем виçĕ хутчен хыпса илме хатарланнă. Гектара яхăн ĕннĕ лаптăксем те пур. Тĕтĕмлĕ вырăнсене пушарнайсем шыв пĕрĕхтерсех тăраççĕ, апла пулин те торф ĕнме пăрахмасть.

ЧР Çут çанталăк министерстви вăрманта канма кăмăллакансене тимлĕрех пулма ыйтать. Çулăм тухма нумай та кирлĕ мар: сӳнтермен кăвайт, йăсăрланакан сигарет тĕпĕ... Çӳп-çапа тĕплĕ пуçтармасан хут тĕрки е ванчăк кĕленче хăрушă инкек сăлтавĕ пуласси те инçе мар: кантăк хĕвел пайăркине фокуслатнă май типĕ курăк е çӳп-çап туххăмрах хыпса илет. Çывăхра тĕтĕм шăршине туйсан Çут çанталăк министерствине /41-48-38/, çывăхри лесничествăна е пушар хуралне пĕлтермелле.

Çутминăн Чрезвычайлă лару-тăрусен мониторингпа прогноз секторĕн специалисчĕ В.Михайлов «пысăк масштаблă пушарсем мар, хăй тĕллĕн ĕнекеннисене» кăна шута илнине пĕлтерет пулин те торфлă шурлăхсенче йăлтах лăпкă пулнине ĕнĕнме çăмăлах мар. Типĕ шурлăхсем харăссăн хыпса илессе кӳршĕри Чулхула облаçĕ те, Мускав çывăхĕнчи регионсем те тĕлленмен, халĕ вара шутне çухатнă гектарсем кĕл пулса выртаççĕ. Пырса кĕме май çук, çунăк шăрши çилпе вун-вун çухрăма саланать. Ахăртнех, унти инкек те пĕчĕк лаптăкранах пуçланнă... Виçесĕр шăрăхра, шатăр типпе пула вăрман «кавирĕ» кăна мар, торфлă шурлăх та туххăмрах хыпса илет.

Чрезвычайлă лару-тăрусен патшалăх комитечĕн пуçлăхĕ В.Петьков палăртнă тăрăх – пушарăн кунашкал пысăк хăрушлăхне 1972 çулхи инкекпе кăна танлаштарма пулать. Çавăн хыççăн пушарнăйсем тĕплĕ хăç-пăшалланнă курăнать: вăрмансемпе ялсене чикĕлекен суха йĕрĕсене çĕнетнĕ, вĕтлĕхе касса тирпейленĕ. ПК кашни ял тăрăхĕнчех пушар сӳнтермелли хатĕрсене алă айĕнче тытнине пĕлтерчĕ. Хальхи вăхăтра çырмасене тасатассипе, вĕсем патне пымалли çула йĕркелессипе çыхăннă хĕрӳ ĕç пырать. Пур яла та телефон çыхăнăвĕпе тивĕçтернĕ.

Патшалăх комитечĕн кăтартăвĕсем тăрăх вăрманти пушарсем пур чухне те тенĕ пек этем айăпĕпе тухни куç кĕрет. Çав шутра хуçалăхра типĕ çум курăкпа ытти çӳп-çапа тĕлли-паллисĕр çунтарни, кăвайта сӳнтерме манни кăна мар, ятарласа чĕртни те! Иртсе каякан пуйăс хĕмĕсем те типĕ курăка тивертсе хăвараççĕ.

Республикăн Çут çанталăк министерстви, пĕлнĕ пекех, хăрушлăхлă тапхăр пуçланичченех ведомствăн экологи фончĕпе пĕрле самолет тара илнĕ. Сăнавçăсем экипажпа пĕрле Чăваш Енĕн вăрманлă çĕрĕсене пăхса çаврăнаççĕ. Вĕсем вара республикăра – 596,7 пин гектар.

■ **Татьяна ВЫШИНСКАЯ**

ВУЛАКАН ЫЙТАТЬ, СĔНЕТ, АСĂРХАТТАРАТЬ

Атăл шывне вараласçĕ

Шупашкарта пурăнакансем тӳнтерле кунашкал ĕçе тахçанах курнă. Апла пулин те курмăш пулса çăвара шыв сыпнă. Юсав ĕçĕсем ирттернĕ чух чакаланă-купаланă лаптăксене, çĕнĕ çурта хута ярсан ун таврашĕнчи вырăнсене тикĕслесе-якатса тӳрлетсен, çиелтен торф сапса хуратсан курăк вăрри акаççĕ те ĕçе вĕçленĕ тесе пуçлăхсем пĕр кăмăллăн алă пусаççĕ.

Çумăр çунă хыççăн вара вун-вун тонна шыв канализацие кĕрет, Атăла юхса тухса ăна вараласть.

Кун пирки чиновниксем шухăшламаççĕ те пулас. Унсăрăн вĕсем торфа тăпрапа хутăштарса кăпкалаттарнă пулĕччĕç.

Тикĕслесе якатнă çĕр çине торф сапса тухни – çăмăл ĕç, тар кăларса вăй хумаллискер мар.

Тĕп хуламăрта çут çанталăка сыхлакан яваплă организацисем пур. Анчах вĕсене торф çумăр шывĕпе канализацие юхни питех кăсăклантармасть ахăр. Ара, унăн тытăмĕнче сиенлĕ йывăр металсем – цинк, тăхлан, тимĕр – çук вĕт. «Мĕн усăсăр шавламалла», – теççĕ ахăр вĕсем. Тĕп çул хĕрринчи çĕр лаптăкĕсене торф сапсан вĕсем йăсăрланса выртнă тĕслĕх пĕрре кăна мар пулнă. Вĕри çанталăкра вăл хăй тĕллĕн чĕрĕлсе çунать. Самана улшăннине пăхмасăр тирпей-илем кĕртекенсем йăлана кĕнĕ меслете çĕнетес темеççĕ.

Тен, çитет пулĕ торфа çумăр шывĕпе юхтарма, Атăл шывне варалама?

■ **А.ВИШНЕВСКИЙ.**

Шупашкар хули

Левентей мучи çăпатисем

Шупашкарти В.И.Чапаев музейĕнчи çăпата куравĕнче хула çыннисенчен е хăнисенчен хăшĕ-пĕри пулса курнах. Экспоначĕсене вара Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Нарат Чаккинчен илсе килнĕ, вĕсем Левентей мучин аллисем ăсталанăскерсем. Унăн ывăлĕ Василий Леонтьевич Евдокимов курма пынисене çавăн пирки тĕплĕн каласа пачĕ. Пушăтлăх çăкана Нухатнар-Хаснар тăрăхĕнчи вăрманта каснă имĕш. Ĕç ветеранĕ пӳртре çӳремелли çăпата таранах хатĕрленĕмĕн хăй вăхăтĕнче. Вутта е нимене каякансене, вăрăм çула пуçтарăннисене пушăтран хатĕрленĕ пушмака укçасăрах панă вăл.

Чиркӳ çумĕпе юхакан шывра шӳтернĕ пушăтпа ĕçлеме çăмăл пулнă. Çавсене аса илсе Василий Леонтьевич икĕ кĕнеке кăларнă. Юлашки «Хуракасси тăрăхĕнче» ятпа «Çĕнĕ вăхăт» типографире çапăнса тухнă.

В.Евдокимов В.И.Чапаев музейĕн хастар членĕ пулнипе пĕрлех районти пуçарулла тавра пĕлӳçĕ шутланать. Атăл çыранĕсене çирĕплетнĕ çĕрте вăй хунă строитель Шупашкарта тĕпленнĕ пулсан та тăван ял çулне манмасть, ашшĕ-амăшĕн çурт-йĕрне тăн-тăн тытать.

■ **А.МАКСИМОВ.**

Сĕнтĕрвăрри районĕ

• Çивĕч ыйту

Автобус çӳремест

Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-70-мĕш çулĕсенче Мартынкасси тăрăхĕнче пурăнакансем Шупашкара е Элĕке каймашкăн Йĕпрем чарăнăвне 8 çухрăм утнă. Халĕ, Ишек-Элĕк çулне асфальт сарнă хыççăн, Хурасан еннеллеваскатпăр. Паллах, çуран.

Кӳршĕ районсенче çак ыйтăва ăнăçлă татса панă: аякри ялсене микроавтобуссем çӳреççĕ. Акă Тивĕшсем валли ятарлă рейс уçнă. Анаткассем Çĕрпĕве те, Шупашкара та автобуспа ларса каяççĕ.

Пĕлтĕр Хурасан ялĕнчен Мартынкассине çитиччен çула юсарĕç. Çакăншăн район пуçлăхĕсене ырăпа асăнса хăвармалла. Пирĕн тăрăхри ачасене халĕ Чăваш Сурăм вăтам шкулне ăс пухма автобуспа илсе çӳреççĕ. Çапах та ял çыннисене меллĕрех пултăр тесе тăрăшакан çук. Ку тăрăхра пенсионерсемпе инвалидсем кăна 120-ĕн. Вĕсен ял тăрăх администрацине, врач офисне, тĕслĕх вулавăша, район центрне, Шупашкара кайса килмелли тупăнатех.

Аякри ялсенчи халăхăн чун ыратăвне паянхи пурнăçра никама каласа та, çырса та итлеттерме çук.

Иртнĕ çулхи чӳк уйăхĕн 2-мĕшĕнче Мартынкасси культура çуртĕнче район администраци пуçлăхĕн çумĕ тирпей-илем кĕртес ыйтупа тĕл пулу иттерчĕ, çивĕч калаçу хыççăн çынсен ыйтăвĕсене хуравларĕ. Анчах ялăн тĕп урамне асфальт сарасси тата автобус рейсĕ уçасси пирки сăмах пуçарсан татăклăн калаймарĕ. Район администрацийĕн çирĕп палăртса хунă план çук-мĕн. Çакна вăтăр çул иртсен те татса пама пултарайманни тĕлĕнтерет те, пăшăрхантарать те. Ытти районта апла мар-çке: самана йывăрлăхĕсене пăхмасăр çул та хываççĕ, пахалăхлă шыв та кĕртеççĕ...

■ **В.АРХИПОВ.**

Элĕк районĕ. Мартынкасси ялĕ

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн членĕсем 2010 çулхи çурла уйăхĕнче граждансене харпăр хăй ыйтăвĕсемпе йышăнмалли КУНСЕМ

/Цифрăсемпе йышăну кунĕсене палăртнă/

2	**В.В.Тимофеев**	Чăваш Республикин Президенчĕн Администрацийĕн Ертӳçи
9	**В.П.Петров**	Чăваш Республикин юстици министрĕ
16	**В.П.Муллина**	Чăваш Республикин сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ
23	**Ю.П.Волошин**	Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Республикин промышленноçпа энергетика министрĕ
30	**Г.П.Чернова**	Чăваш Республикин вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕ

Граждансене Правительство çуртĕн 1-мĕш хутĕнче Чăваш Республикин Президенчĕн Администрацийĕн халăха йышăнмалли пӳлĕмĕнче /125-мĕш пӳлĕм/ 16.00 сехетрен пуçласа 19.00 сехетчен йышăнаççĕ.

Ыйтса пĕлмелли телефонсем: 62-34-53, 39-34-58.

Ирçе Çармăс вăрманĕ çунать

Вăрах тăракан вĕри çанталăка пула Йĕпреç тăрăхĕнчи вăрмансенче вут-çулăм ялкăшма тытăннă 80 ытла тĕслĕхе шута илнĕ. Вĕсене пурне те вăхăтра сӳнтернĕ. Çынсем 1972 çулхи çурла уйăхĕнче ку тăрăхри пысăк лаптăксем çинчи йывăçсем çунса кăмрăкланнине манман-ха. 38 çул каяллахи синкер каллех таврăннă. Иртнĕ вырсарни кун Йĕпреç лесничествин Ирçе Çармăс участокĕнчи вăрманта /ку вырăнта талккăшпех тӳпенелле çурта пек йăрăс хырсемпе симĕс тутăр çыхнă хурăнсем кармашаççĕ/ пушар алхасма тытăннă. Вутçулăмпа кĕрешме кар тăрса тухнă çынсем çĕр каçипех тăрăшнипе хăрушлăх çавăрса илнĕ кварталти инкекĕн çулне пӳлнĕ. Анчах ир енне пушар каллех «пуçне» çĕкленĕ. Тип-шар алхасакан вырăна çывăхри ялсенчен те, Йĕпреçрен те халăх йышлăн килнĕ...

Ирçе Çармăс тăрăхĕнчи хăрушă пулăмăн сăлтавне яваплă органсем тĕпчеççĕ. Вăл тĕрлĕ пулма пултарĕ. Эпир пĕтĕмлетиччен кĕтсе тăмасăр çапла калăпăр: кирек хăçан та, паянхи вĕри çанталăкра уйрăмах, сыхă та тимлĕ пулмалла. Пĕчĕк шăрпăкра пысăк вăй «пытаннине» яланах асра тытмалла.

■ **Г.ВАСИЛЬЕВ**

Килмерĕç...

Шупашкарти артистсем Кунерти культурăпа кану центрне çулсеренех килеççĕ, халăха хăйсен пултарулăхĕпе савăнтараççĕ. Кăçалхи утă уйăхĕн 9-мĕшĕнче К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш академи драма театрĕн труппи «Чун кĕвви» спектакльпе çитмеллеччĕ. Культура ĕçченĕсем кун пирки вырăнти халăха икĕ эрне маларах пĕлтернĕ. Карач, Куснар тата ытти ялта пурăнакансем спектакль курма машинăсемпех пуçтарăнчĕç. Эпĕ те Паймит ялĕнчен килтĕм. Драма е камит пăхма питĕ кăмăллатăп. Иртнĕ çулсенче, совхозра вăй хунă тапхăрта, Шупашкарти театра ятарласа пухăнса каяттăмăр. Халĕ çав ырă йăла пĕтрĕ ĕнтĕ, хамăр пата килессе кăна кĕтмелли юлчĕ.

Шел, ку хутĕнче шанни кăлăхах пулчĕ. Артистсем сăлтавне шăнкăравласа пĕлтермерĕç. Кунерсен хăйсен вĕсемпе çыхăнма тиврĕ: 40-50 çыншăнах çула тухма килĕшмеççĕ-мĕн Шупашкарсем.

Пирĕн тăрăхра пурăнакансем вара яланах йышлă пухăнаççĕ. Акă, тĕслĕхрен, пĕлтĕр «Юратсан юрлас килет» спектакль кăтартрĕç. Тепрехинче «Гражданла брак» ятли пулать терĕç. Хăйсем вара пĕррешнех тепĕр хут кăтартрĕç. Апла пулин те: «Кăна эпир курнă», – тесе тухса каякан пулмарĕ.

Манăн шухăшпа – панă сăмаха пурнăçламаннипе халăх шанми пулать. Тепрехинче çынсем спектакль пăхма клуба лăк тулли пухăнаççĕ тесе кам шантарма пултарĕ?

■ **Н.ЧЕРНОВА.**

Куславкка районĕ

Атăл хĕрринче паллă турĕç

Раççей Тинĕс-çар флочĕ – наци мăнаçлăхĕ. Флот историйĕ – пĕтĕм Раççей мухтавĕн, халăхăн çăл куç пек тапса тăракан вăй-хăвачĕн, пултарулăхĕн, кăмăл-сипечĕн çул çыравĕ. Тинĕс-çар флочĕ кирек епле вăя та тивĕçлипе сирсе яма пултарать.

Пирĕн çĕр-шывра çак уява 1939 çултанпа утă уйăхĕн юлашки вырсарни кунĕнче паллă тăваççĕ. Кăçалхи утă уйăхĕн 25-мĕшĕнче иртрĕ. ТÇФ ветеранĕсем, службăра халĕ тăракан салтаксем, Тăван çĕр-шывăн пулас хӳтĕлевçисем çак куна Атăл хĕрринче пухăнса анлăн паллă турĕç. Вĕсене Шупашкар хула администрацийĕн, Чăваш Ен çар комиссариачĕн ĕçченĕсем саламларĕç, эстрада юрăçисемпе артистсем хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç. Çавăн пекех тĕрлĕ спорт вăййине, конкурссене хутшăнса вăй виçрĕç, ăсхакăлне тĕрĕслерĕç. Тинĕс-çар флочĕн салтакĕсен пĕр-пĕринпе калаçмалли, аса илмелли те чылай пулчĕ.

■ **В.НИКОЛАЕВА.**

Г.ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕсем

• Ыйту-хурав

Май килмест

Кăçал упăшка 60 çул тултармаллаччĕ. Шел, тивĕçлĕ кану ӳсĕмне пурăнса çитеймерĕ, вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Унăн пенсийĕ валли пухăнса пынă укçине мана параççĕ-и?

Г.ИВАНОВА.

РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, сирĕн ыйтăва тивĕçтерме май килмест. Мĕншĕн тесен ĕç пенсийĕ тытăмĕнчи страховани тата пухăнса пыракан пайсем федерацин «Раççей Федерацийĕнчи обязательнăй пенси страхованийĕ çинчен» 167-мĕш саккунĕ вăя кĕнĕ хыççăн 2002 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен йĕркеленме тытăннă. Страховани пайĕ страхланă мĕн пур çыннăн, ӳсĕме пăхмасăр, пуçтарăнса пырать, гражданин вăхăтсăр вилсен çав укçа ирĕке йышăнакана куçмасть.

Пухăнса пыракан пай 1967 çулта тата ун хыççăн çуралнă граждансен йĕркеленет. 2002-2004 çулсенче вăл 1953-1966 çулсенче çуралнă арçынсен, 1957-1966 çулсенче çуралнă хĕрарăмсен пуçтарăнса пынă.

Мăшăрăр асăннă ӳсĕмрен аслăрах пулнă май унăн лицевой счечĕн ятарлă пайĕнче пенси валли укçа пухăнса пыман.

Тивĕçлĕ канăва – маларах

Штата пĕчĕклетнĕ май 54 çула кайсан ĕçсĕр тăрса юлтăм. Пенсие маларах тухма пултаратăп-и?

И.ГРИГОРЬЕВА.

Федерацин 1991 çулхи ака уйăхĕн 19-мĕшĕнчи «Раççей Федерацийĕнчи халăх ĕçлевĕ çинчен» 1031-1 саккунĕпе килĕшӳллĕн ĕçпе тивĕçтерекен центр çынна тивĕçлĕ ваканси тупса параймасан ĕç пенсине маларах кăлармашкăн штата пĕчĕклетнипе вырăнсăр юлнисене /РФ Ĕçлев кодексĕн 81 статйин 2 пункчĕ/ сĕнме пултарать. Ĕç пенсине çирĕплетнĕ йĕркерен 2 çул маларах памалла тăваççĕ. Сăмахран, хĕрарăмсем 53 çул тултарсан. Кун пек чух пĕтĕмĕшле страховани стажĕ 20 çултан кая мар пулмалла.

РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕ пĕлтернĕ тăрăх, ку ыйтупа малтан ĕçпе тивĕçтерекен центра каймалла, унта сĕнӳ илнĕ хыççăн – пенси службин хăвăр пурăнакан вырăнти управленине. Пенси виçине çирĕплетнĕ йĕркепе 2002 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлнехи стажа тата уйăхри вăтам шалăва тĕпе хурса палăртаççĕ. Тивĕçлĕ канăва тухмалли ӳсĕм çитиччен ăна ĕçпе тивĕçтерекен служба Пенси фондне куçаракан укçаран тӳлеççĕ.

Кăларăма Валентина СМИРНОВА хатĕрленĕ.

•Кĕске хыпарсем

Яла çитерме ыйтатпăр

Çĕрпÿ районĕнчи Амачкассинче ытларах ĕç ветеранĕсемпе тыл ĕçченĕсем пурăнаççĕ. Чылайăшĕн сывлăхĕ хавшанă. Чирлекенсем те пур. Ялта больница е фельдшер пункчĕ çук. Медицина пулăшăвĕ илме е çывăхри яла, е район центрне каятпăр.

Пире типĕре çул çÿресси хăратмасть. Йĕпере яла çăмăл автомашинăпа кĕме кансĕр: пылчăк çăрăлать. Президент программипе республикăри кашни ял патне асфальт çул çитерчĕç, пирĕн яла темшĕн манса хăварчĕç. Район администрацине çыру çырса ятăмăр. Унтан панă хурава ĕненес пулсан кăçал Амачкассине асфальт çул çитермелле.

2010 çулăн çиччĕмĕш уйăхĕ пырать – яла пырса кĕнĕ çĕрте çул тăвакансем ĕçлени курăнмасть. Çулталăк вĕçлениччен вăхăт пур-ха. Строительсем килессе кĕтетпĕр.

В.СМОРОДИНОВ.

3 кунра пĕрре

Эпир Шупашкар районĕнчи Атайкассинчи Хĕвел тухăç тăкăрлăкĕнче пурăнатпăр. Яла ĕçмелли шыв çĕртмен 21-мĕшĕнчен пуçласа 3 кунра пĕрре параççĕ. Колонкăран 3 сехет юхать те – чарăнать. Çынсен мĕнле савăт пур – пурне те тултараççĕ. Анчах шыв пирĕн тăкăрлăка çитеймест. Мĕншĕнне ял администрацийĕнче пĕлесшĕн пултăмăр – хурав памарĕç.

Халăха шывпа тивĕçтеретпĕр тесе килĕрен укçа пухаççĕ, квитанци тыттараççĕ. Анчах касса çирĕплетекен чексăр. Вырăнти влаçăн яла ĕçмелли паха шыв лайăхрах парса тăрасси çинчен те шухăшласчĕ.

Я.ФЕДОРОВА.

•Вулакан пултарулăхĕ

Чăваш Ен

Сар хĕвел хăпарать тухăçран,
Çут шевле сăрхăнать
кантăкран.
Тăр-тăри шăрататать юррине,
Ун сасси ăсанать инçене.

Чăваш Ен, Чăваш Ен, Чăваш Ен,
Тăван кил пек эс çывăх, ĕнен.
Чăваш Ен, Чăваш Ен, Чăваш Ен,

Куллен-кун чечеклен,
çирĕплен.

Ĕç çынни ыйхăран вăранать,
Ĕç-пуçа васкаса пуçăнать.
Шăнкăр-шăнкăр юхать
юхан шыв –
Кĕввипе савăнать ман
çĕр-шыв.

Савăнма чăннипех сăлтав пур,
Пирĕн халăх сăпайлă, сатур.
Ятлă-сумлă çынпа та пуян:
Уçлăх тусĕ – ентеш Андриян.

Атăл тăрăх килет пăрахут,
Таçтанах сас парать: «Ут та-
у-ут!»
Ытарма çук çĕр-шывăм аван,
Эпир пур, пур пулатпăр ялан.

Пурнăç каçалăкĕ

Эп çуралнă ялта, Шелттемре,
Ирхине, сар хĕвел çутинче.
Улăхра, тикĕс çеç çеремре,
Ĕç вĕренĕ колхоз пахчинче.

Хĕпĕртенĕ атте чĕререн,
«Тĕпкĕç!» – тенĕ çÿле çĕклесе.
Çут çанталăк ăслах этемрен –
Çил уланă пире шеллесе.

Чăннипех йывăр пулчĕ ÿсме,
Ас тумастăп тăван аттене.
Тем те курнă, тем тивнĕ тÿсме:
Выççине, тип-шарне, ыттине...

Пулнă-иртнĕ, тинех сăмах çук,
Турă пычĕ мана пулăшса.
Савнă ялăм хама шаннă чух
Эп ĕçлерĕм чунран тăрăшса.

Килĕшмерĕ ыр ĕç хăш-пĕрне,
Тăшман пулчĕ ман çывăх
юлташ.
Тупа тунă юнпа пĕр-пĕрне
Пулăшма... Аса ил-ха, янташ.

Мĕн туни çухалмасть ĕмĕрне,
Пулманни тăвăнать ÿлĕмрен.
Туманни хăвармасть хăй
йĕрне,
Кĕвĕçÿ ун тухмасть чĕререн...

Çул каçалăкĕ вăрăм, çавах
Ав, утап-ха кунсем хăварса
Çитмĕле те эп çитрĕм, тавах!
Пурнăçлап тивĕçе вăй парса:

Çемье пур. Лартрăм пÿрт
тăрмашса,
Тĕрлĕ йывăç чылай пахчара.
Кил-йыш пычĕ мана пулăшса
Ĕçсенче, сăмахпа та ара.

Халь эп хатĕр пурне йăл кулма,
Пулччăр: сывлăх тата тÿрĕ çул.
Çын çуралтăр телейлĕ пулма,
Ăнса пытăр кашнийĕн кун-çул!

■ **Алексей ЗАЙЦЕВ.**

Канаш районĕ,
Кивĕ Шелттем ялĕ

Г.ВЕРБЛЮДОВ сăн ÿкерчĕкĕ.

• Тишкерÿ

Тымартан хăртнисем

Юратнă ĕçне вырнаçаймарĕ

Ун чухне Елчĕк районĕнчи «Колхоз ялавĕ» хаçатра ĕçлеттĕм. Редакцин пĕртен пĕр транспорт – «ИЖ-56» мотоцикл. Районта çитсе курман ял юлмарĕ. Кампа кăна паллашман, кампа кăна калаçман. Çавăн чухне курнăçнăччĕ унпа. Хăйне тыткаланипе ял çыннисенчен уйрăлса тăратчĕ вăл. Çав тери типтерлĕ, кĕскен те татăклăн калаçать. Урине ată тăхăннă, утти çирĕп. Пысăк культурăллă çын пулни туйăнса тăрать. Пĕррехинче редакцие кĕрсе тухрĕ. Учительте ĕçлеме ĕмĕтленет. Районти çут ĕç пайне те çитнĕ. Шел, унăн ыйтăвне тивĕçтермен. Ун чухнехи çут ĕç пайĕн ертÿçинчен В.В.Шиповран ыйтса пăхрăм. Пуçлăх мана халăх тăшманĕ çине пăхнăн тĕсесе илчĕ те татса хучĕ: «Тĕрме çынни».

Вăрăмхăвара пурăнакан Исаак Михайлович Горбунов, чăнах та, 1937 çулта репрессие лекнĕ. Ун чухне вăл Тутарстанри шкулта учительте ĕçленĕ. Маларах Лаш Таяпари, Яманчÿрелĕнчи шкулсенче вĕрентнĕ. 1956 çулта реабилитациленĕ пулин те – районти, ялти влаç çыннисем унран ютшăнма тăрăшатчĕç. Çав çынсен шутне эпĕ хама та кĕртетĕп. Хăраттăмăр çав, хăраттăмăр.

Хăй вăхăтĕнче И.М.Горбунов совет влаçĕшĕн кирлĕ пулнă. Паян ун çинчен Елчĕк энциклопедийĕнче тĕплĕ çырса кăтартнă. 1931-1935 çулсенче Мускаври совпартшкулта вĕреннĕ. Çĕнĕ саманара учитель ĕçне куçиччен Пĕрремĕш тĕнче вăрçине хутшăннă, Граждан вăрçи вăхăтĕнче – Хĕрлĕ Çар салтакĕ. Туркестанра басмачсемпе кĕрешнĕ, юлан утлă разведка отрячĕн командирне çитнĕ.

1937 çулта мĕнле сăлтавпа айăпланине палăртман, апла пулин те ăна тавçăрса илме пулать. 1893 çулта çуралнă И.М.Горбунов Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен 1911 çулта вĕренсе тухнă. 1915 çулта Хусанти прапорщиксен шкулĕнче пĕлÿ илнĕ. Часах çар çынни пулса тăнă. Граждан вăрçи вăхăтĕнче ăна Колчак çарне мобилизациленĕ. Тăхăр уйăхран хăй ирĕкĕпе хĕрлисен енне куçнă, совет влаçĕшĕн кĕрешме тытăннă. Граждан вăрçи вĕçленсен учитель ĕçне пуçăнни çинчен асăнтăмăр.

Елчĕк энциклопедийĕнче паянхи Елчĕк районĕнчи ялсенчен Чĕмпĕрти шкулта вĕреннисен списокне илсе кăтартнă. Çав списокра И.М.Горбунов хушамачĕ çук. Унта Исаак Михайлович Михайлова асăннă. Çуралнă вăхăчĕ те, ял ячĕ те çавах. Мĕн пирки тата хăçан хăйĕн хушаматне улăштарнă – эпир пĕлместпĕр.

Эпĕ ас тăвасса И.М.Горбуновăн икĕ хĕрĕ Елчĕкре пурăнатчĕ. Галя ятли пултарулăх коллективне хастар хутшăнатчĕ. Сăмах май, район энциклопедийĕнче И.М.Горбуновăн мăнукĕ те тивĕçлĕ вырăн тупнă. Ираида Захарова Эстонире тĕпленнĕ, Балти тăрăхĕнче пурăнакан чăвашсен культура пĕрлĕхне ертсе пырать. Чăваш çĕр-шывне час-часах килсе çÿрет, чăвашлăх туйăмне чун-чĕринче упрать.

Патреккелте çухалнă хушамат

Патреккел илемлĕ те янăравлă хушаматсемпе пуян. Халăхра çакăн пек халап та çÿрет. Патша саманинчи çырав вăхăтĕнче Патреккел пупĕ ял çыннисене тĕрлĕ, илемлĕ, янăравлă хушамат парнеленĕ имĕш. Чăнах та, паян кунччен асра юлмалла илтĕнеççĕ: Миллин, Доброхотов, Добронравов, Теплов, Миловидов... Иртнĕ ĕмĕр пуçламăшĕнче Патреккелĕнче Миролюбов хушаматпа çÿрекенсем те пулнă. Ун чухнехи пек каласан – вĕреннĕ çынсем. Чиркÿ çыннисем. Татса калама пултараймастăп, тен, çавсенчен пĕри – ялти пуп – илемлĕ те янăравлă ятсем парса тухман-ши? Елчĕк энциклопедийĕнче Патреккелĕнчен çут тĕнчене тухнă нумай-нумай çынна асăннă, йăх тымарĕсене палăртнă. Чыс та мухтав çавăншăн энциклопедие хатĕрлекенсене.

Çапах та А.А.Буйновский çинчен çырнă статьяра Елчĕкри социал-демократсен ушкăнне А.И.Миролюбов кĕни çинчен асăннă. Патреккел çыннисем пулнă-ши вăл – эпир пĕлместпĕр. Пире Патреккелĕнчен тухнă, тахçанах манăçнă Никандр Иванович Миролюбов шăпи кăсăклантарчĕ.

* * *

Революциччен чăваш интеллигенцийĕ йышлă пулман. Чĕмпĕрте, Хусанта пĕлÿ илнĕ чăваш хастарĕсем яла таврăнса учительте ĕçленĕ, тĕн çыннисем пулса тăнă. Патша саманинче паянхи Елчĕк, Патăрьел районĕнчи ялсем Пăва уесне кĕнĕ. Хулара ăс пухса яла таврăннисене пысăка хурса «Вĕреннĕ çынсем» тесе хисепленĕ. Чăваш хресченĕ йывăрлăха кĕрсе ÿксен кирек хăçан та вĕсемпе канашланă, пулăшу ыйтнă. Хулара тĕрлĕ шухăш-кăмăллă юхăмсемпе паллашнă, пĕр-пĕринпе çыхăну тытнă. Акă Кивĕ Эйпеçре 1881-1917 çулсенче пупра ĕçленĕ А.В.Рекеевпа Аслă Пăла Тимешĕнче çуралса ÿснĕ Г.Ф.Алюновах илер. Иккĕшĕ те тĕн семинарийĕнче пĕлÿ илнĕ, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренсе тухнă. И.Я.Яковлевăн чи малтанхи вĕренекенĕ А.В.Рекеев пирвайхи чăваш букварĕсене кăларас ĕçре пултарулăх кăтартнă, тĕрлĕ ялта учительте ĕçленĕ. Г.Ф.Алюнов вара – чăваш наци юхăмне йĕркелесе яракансенчен пĕри – революцие парăннă çын. Рекеевшăн И.Я.Яковлев – чăваш патриархĕ, чи хаклă çын. Алюнов çав патриарха хирĕçле статьясем çырса пичетлет. «Хыпар» хаçатра ĕçленĕ Алюнова эсер тесе арестлеççĕ, Çĕпĕре ăсатаççĕ. Унтан чикĕ леш енне кăларса яма йышăнаççĕ. Йывăрлăха кĕрсе ÿкнĕ Алюнов Кивĕ Эйпеç пупĕ патне пулăшу ыйтса çыру çырать, укçине вара вăрттăн адреспа Гельсингфорс /халĕ Хельсинки/ хулине ярса пама тархаслать. Пуп кирлĕ чухлĕ укçа ярса парать, çапла вара чиркÿ çынни революцилле шухăш-туйăмпа вĕресе тăракан çамрăка йывăрлăхран, выçă вилесрен çăлса хăварать. Тĕлĕнмелле-и? Тĕлĕнмелле. Ку кăна та мар: Г.Ф.Алюнов революци вучахĕнче «çунса» кайсан та /1920 çулта Хусан тĕрминче çут тĕнчерен уйрăлать/ А.В.Рекеев пуп мĕн виличченех, репрессие лексенрен хăрамасăрах, Алюнов çырăвĕсене упраса усрать.

Чуна пырса тивекен çырусем. Гаврил Федорович Алюнов хăйĕн амăшне те, пĕлĕшĕсене те ырăпа асăнать, вĕсем патне тăван яла кучченеçпе пыма ĕмĕтленсе пурăнни çинчен пĕлтерет...

А.В.Рекеев вăрттăнлăхра усранă çырусене Г.А.Александров историк шыраса тупса «Хыпар» хаçатра 1994 çулхи пуш уйăхĕн 22-мĕшĕнче пичетленĕччĕ.

Çав çырусене вăрттăнлăхра упрама А.В.Рекеева мĕн хистенĕ-ши? Юлташлăх, чăвашлăх туйăмĕ-ши? Ахальтен мар пулĕ пĕр çырăвĕнче Г.Ф.Алюнов çаплах çырать: «Эпĕ чăвашсемшĕн ĕçлеме тăрăшасшăн...»

* * *

Эпĕ хамăн шухăшран пăрăнса каймарăм-ши? Çук, калас шухăша тăрласа çитереймерĕм-ха. Пысăкки аякран курăнать тетпĕр те – иртнине, хамăр курманнилтнине ăнланса илме, хак пама çав тери те кăткăс. Вăрçă пынă вăхăтра шкула маршал сăнĕллĕ кĕнеке илсе пыначчĕ. Учительница ăна çийĕнчех чернилпа хуратса тухма хушрĕ. /Ун чухне кивĕ кĕнекесем çинче çырма вĕренеттĕмĕр/. Блюхер сăн ÿкерчĕкĕччĕ пулас, халĕ ăна эпир Граждан вăрçинче чапа тухнă çар пуçĕ пек пĕлетпĕр. Тăхтин армак-чармак куçлă-пуçлă Колчакĕ пирĕн аса кĕрсе юлнă. Халĕ Колчака паллă тĕпчевçĕ тесе хаклакан та сахал мар. Акă Шупашкарта та Иркутск артисчĕсем адмирал çинчен калăпланă спектакль кăтартрĕç.

Çеçпĕл Мишшине халалласа çырнă поэмăна, шухăшлав-легендăна, «Вилĕме хăйсем чĕнмеççĕ хурçă шанчăклă çынсем» тесе ят панăччĕ.

Çÿлерех асăннисенчен хăшне хурçă шанчăклă çынсем тесе хаклама пулать? Çапла ыйту лартни вырăнсăр тесе шухăшлатăп. Апла пулин те вĕсенчен кашниех революци пăтăрмахĕ витĕр тухнă. Пĕри – И.М.Горбунов – Колчак çарне ирĕксĕр мобилизациленĕскер – Хĕрлисен енне куçнă пулин те – каярахпа репрессие лексе ссылкăра тертленнĕ, тепри – Г.Ф.Алюнов эсер – чăвашсемшĕн ĕçлеме тăрăшасшăнскер – Самарта йĕркеленнĕ Комуч правительствипе çыхланнă, каярахпа, большевиксен аллине лексен, Хусан тĕрминче «çухалнă». А.В.Рекеев пуп – ватлăхра ырлăх-пурлăх курайманскер – ĕмĕр тăршшĕпе пухнă этнографи материалĕсене Шупашкарти историпе этнографи музейне халаллама мехел çитернĕ.

Çав çынсене питех те лайăх пĕлекен тепĕр çын та пулнă – Никандр Иванович Миролюбов. Вăл 1870 çулхи юпа уйăхĕн 17-мĕшĕнче Теччĕ уесне кĕрекен Патреккелте çуралнă. Ашшĕ, тĕн çынни пулнăран, ывăлне Хусанти тĕн академине вĕренме янă, ăна пĕтернĕ хыççăн /1896 ç./ Хусан университечĕн юридици факультетĕнче вĕреннĕ. Диплом илнĕ хыççăн университетрах хăварнă /1895 ç/. 1904 çулта кафедра профессорĕ пулса тăрать. Каярахпа ăна Хусан суд палатин прокурорĕ пулма уйăрса лартаççĕ. Патреккелтен килсе Хусанта тĕпленнĕ юрист Аслă Пăла Тимешĕнче çуралнă Алюнова, Вăрăмхăваран Хусана çитнĕ И.М.Горбунова та пĕлнех ĕнтĕ. Мĕнле пĕлнĕ, туслă пулнă-и – калаймастпăр.

Ю.В.Гусаров ăсчах-историк çырнă тăрăх – Миролюбов прокурор 1918 çулта шуррисемпе Омск хулине тухса каять. Унта та прокурор ĕçне кÿлĕнет. Колчак хушăвĕпе Комуч правительствин членĕсене арестлеççĕ. /Аса илер: Г.Ф.Алюнов та Комучпа çыхăннă пулнă/. Арестленисен хушшинче Хусанти университетра вĕреннĕ Семен Николаевич Николаев та пур /1880 çулта Пăва уесĕнчи Начар Упире çуралнă/. 1922 çулта Николаевăн Прагăна тухса кайма тивет. Унта библиотекарьте ĕçлет, аса илÿсем çырать. Чехословакие Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларсан ăна арестлеççĕ, тĕрмене хупаççĕ, унтан ссылкăна яраççĕ. Прагăна тепĕр хут тухса кайиччен тăван ялне темиçе кунлăха кĕрсе тухать. 1976 çулта çĕре кĕрет. Унăн аса илĕвĕ Г.Александров историкпе «Хыпар» Издательство çурчĕн гендиректорĕ-тĕп редакторĕ А.Леонтьев тăрăшнипе «Хыпар» хаçатра тата «ЛИК» журналта кун çути курнăччĕ.

Колчак прокурорĕн шăпи чылай синкерлĕрех. Николай патшапа унăн çемйине мĕнле вĕлернине тĕпчеме комиссия йĕркелеççĕ. Ăна ертсе пыма Н.А.Соколов следователе хушаççĕ. Ю.В.Гусаров историк çырнă тăрăх, Н.А.Миролюбова çав комиссине «надзирающий прокурор» ятпа кĕртеççĕ. /«Чăваш энциклопедийĕ, 3 том. 98 стр./.

Граждан вăрçи вĕçленсен Миролюбов Харбина çитет, унта эмигрантсен обществин председателĕнче ĕçлет. 1927 çулта Харбинтах çĕре кĕрет.

Халĕ Елчĕк районĕнчи Патреккелте Миролюбов хушаматпа çÿрекен юлман. Колчак прокурорĕн тăхăмĕсем ăçта тухса кайса саланнă-пытаннă – никам та пĕлмест. Хусан университечĕ 2002 çулта кăларнă библиографи словарĕнче кăна темиçе йĕрке пур. Шел, унта прокурор еткер пирки, ăçта упранни çинчен асăнман.

■ **Борис БОРЛЕН**

•Криминал

«Хĕрÿллĕ» кĕвĕçÿ

Упăшки хăйне урăх хĕрарăмпа улталанине пĕлсен кÿреннĕ арăмĕ хăйсен автомобильне вут чĕртнĕ. Мăшăрĕ çавнашкал «хĕрÿллине» арçын шухăшлама та пултарайман.

Шупашкарта пурăнакан арçын 3 сехет çитеспе хунямăшĕ шăнкăравланипе вăранса кайнă. «Санăн машину йĕркеллехи? Хĕрĕм ăна çунтарса ярасшăн пулас», – асăрхаттарнă вăл. Кĕрĕвĕ иккĕленсе чÿречерен пăхнă. Ак тамаша, ВАЗ-2114 ялкăшать кăна!

Пушар хуралĕн ĕçченĕсем вут-çулăма сÿнтернĕ, анчах «кустăрмаллă урхамах» вăйлах сиенленнĕ – текех çул çÿреймĕ. Йĕркелĕх хуралçисем «Жигули» патĕнче пластик савăт тупнă – тĕпĕнче çунакан шĕвек те кăштах юлнă. Куç кĕрет: машинăна унăн хуçин арăмĕ тивертсе янă.

Маларах вĕсем аванах хирĕçсе кайнă. Хĕрарăм упăшкин телефонĕнче вăл ăна урăххипе улталанине çирĕплетекен номерсем тупнă. Шăв-шав çĕклесех хирĕçсе илнĕ хыççăн мăшăрсем иккĕшĕ ик еннелле утнă. Çĕрле вара машинăна вут хыпнă. Мĕншĕн хĕрарăм тарăхăвĕ çемье автомобилĕ çине «тăкăннă»? Упăшки вăрттăн савнийĕпе шăпах çав машина салонĕнче курнăçни пирки хĕрарăм иккĕленмен пулас. Тÿрех мар, çапах вăл преступлени тунине йышăннă. Чăн та, ăна уголовнăй майпа явап тыттараймаççĕ пуль. Тĕп хулан шалти ĕçсен управленийĕн 5-мĕш пайĕн преступленисене тĕпчекен пай пуçлăхĕ Владимир Земсков палăртнă тăрăх, машинăна хунямăшĕ çине çырнă пулин те вăл упăшкипе арăмĕн пĕрлехи пурлăхĕ шутланать. Çавна май кунта гражданла право хутшăнăвĕсем пирки сăмах пымалла-тĕр.

Тепĕр тесен упăшкипе арăмĕ ятлаçни кашнинчех уйрăласси патне илсе пымасть. Ку тĕслĕхре те çемье арканман. Анчах автомобиле ярса илнĕ вут-çулăм хĕрÿлĕхĕ çак мăшăр юратăвне тата хĕрÿллĕрех тума пулăшĕ-ши?

Усал конкуренци

Клиентсемшĕн пыракан кĕрешÿ тепĕр чух саккунлăх чиккисенчен те тухса каять. Шупашкарти таксист конкурентсемпе курнăçнă хыççăн больницăна лекнĕ. Янахне хуçнăскер çийĕнчен машинăсăр та юлнă.

Хăй каланă тăрăх, База тăкăрлăкĕнче вăл хăйсен машинисемпе пассажирсене илсе çÿрекен водительсемпе тĕл пулнă, лешсем ăна пĕрле эрех ĕçме сĕннĕ. «Мазда» хуçи, 48 çултискер, çав вичĕ арçынна, тĕрĕссипе, палламан та темелле. Пĕрин ятне пĕлет – çавă çеç. Çапах вĕсемпе пĕрле пулма килĕшнĕ. Çак тĕл пулу хурлăхлă вĕçленнĕ. Пассажирсене илсе çÿрес енĕпе вăрттăн ĕçлекенскерсем таксиста тапăнмаллипех тапăннă: вăл вĕсен клиенчĕсене туртса илет иккен. Тытăçса кайнă. Лешсем ушкăнпа-çке – арçыннăн янахне çапса хуçнă, телефонне, укçине тата... машинине туртса илнĕ.

Уголовнăй шырав оперативникĕсем пуçтахсене темиçе сехетренех тупса палăртнă. Кĕçĕнни 29 çулта, асли 55-ре. Пĕри /таксист янахне шăпах вăл çапса хуçнă/ маларах та йывăр преступленишĕн суд тенкелĕ çине ларнă.

Ют «япономаркăна» вĕсем Николаев ячĕллĕ парк çывăхĕнчи стоянкăна кайса лартнă. Машина тĕлĕшпе апла-капла план пулман теççĕ, хирĕçÿ таксист кÿрентернĕ пĕр хĕре пула тухнă тесе çирĕплетеççĕ. Анчах ку тÿрре тухасси иккĕленÿллĕ, апла пулин те пăтăрмах ÿкерчĕкĕ уçăмлă теме иртерех-ха. «Мазда» хуçи хăй те тем пытарать, çав кун вăл темшĕн рейса та тухман. Вăл больницăра чух пакунлисем ĕç-пуçа уçăмлатас енĕпе çине тăраççĕ.

■ **Ольга ПАВЛОВА**

•Ыйту – хурав

Ирĕке тухасси, паспорт пирки

Упăшка кăçал юсанмалли 1-мĕш колонирен ирĕке тухать. Айăпланнисене яваплăхран хăтармалли йĕркене ăнлантарса пама ыйтатăп.

Л.П.ИВАНОВА.

* * *

Упăшкан паспорт çук. Ăна вăл судпа айăпланиччĕнех çухатнă. Юсанмалли учрежденисенче çухатнă документсене çĕнĕрен тăвас енĕпе мерăсем йышăнаççĕ-и?

О.И.ПЕТРОВА

Ыйтусене **ЧР юсанмалли учрежденисенче саккунсене пăхăнассине сăнаса тăракан Шупашкар прокурорĕ Александр ЗОТОВ** хуравларĕ:

– Вăл е ку вăхăтлăха ирĕклĕхсĕр хăварнисене айăплав вăхăчĕн юлашки кунĕн пĕрремĕш çуррине ирĕке кăлараççĕ. Енчен те айăплав вăхăчĕ кану е уяв кунĕнче вĕçленсен – кану е уяв кунĕ умĕнхи кун. Айăплав вăхăтне уйăхсемпе шутланă чух вăл юлашки уйăхăн тивĕçлĕ кунĕнче вĕçленет, енчен те çак уйăхăн тивĕçлĕ кунĕ çук тăк – çак уйăхăн юлашки кунĕнче.

Ирĕке кăларнă чух çынна унăн япалисене, тÿлев шучĕ çинче упраннă укçине, документсене, хаклă хучĕсене, çавăн пекех ирĕке кăларни тата ĕçлени çинчен калакан документсем параççĕ. Паспортне, ĕç кĕнекине тата пенси удостоверенине те ирĕке тухнă чух параççĕ.

Паспорт, ĕç кĕнеки тата пенси удостоверенийĕ çук, çавăн пекех паспорт вăйра тăмалли вăхăт вĕçленнĕ пулсан юсанмалли учреждени администрацийĕ çĕнĕ документсем тăвас енĕпе мерăсем маларахах йышăнать. Çĕнĕ паспорт илессипе çыхăннă тăкаксене айăпланнă çыннăн тÿлев шучĕ çинчи укçинчен тытса юлаççĕ. Тÿлев шучĕ çинче укçа çук пулсан тăкака патшалăх саплаштарать.

■ **Н.ИВАНОВ**
ыйтса пĕлнĕ

•Яваплăх

Директор саккуна пăсса кредит илнĕ

Мускав районĕн сучĕ нумаях пулмасть «Росинка» ООО директорĕ Галина Григорьева тĕлĕшпе пуçарнă уголовнăй ĕçпе айăплав пĕлтернĕ. Хĕрарăм банка организацин финанс лару-тăрăвĕ пирки суя кăтартусем пĕлтерсе кредит илнĕ.

УК 126 статйипе хаклакан 9 саманта тупса палăртнă. Следстви тĕпчесе пĕлтернĕ тăрăх 2007 çулхи чÿк уйăхĕнчен тытăнса 2009 çулхи пуш уйăхĕччен Григорьева ВТБ банк АУОн Шупашкарти филиалне тата Перекет банкĕн Чăваш уйрăмне «Росинка» ОООн бухгалтер балансне, тупăшсемпе тăкаксем çинчен калакан отчетсене тăратнă, вĕсенче финанс лару-тăрăвне чăннинчен лайăхрах кăтартакан суя цифрăсем пулнă. Çакă директора «Росинка» валли кредит илме кирлĕ пулнă.

Суя çиеле тухнă – уголовнăй ĕç çуралнă. Суд Г.Григорьевăна 5 çуллăх тĕрĕслев вăхăчĕ парса 4 çуллăха условнăй майпа ирĕклĕхсĕр хăварнă. Чăн та, прокуратура çак айăплавпа кăмăлсăр. Патшалăх айăплавçи ООО директорне 3 çуллăха колони-поселение ăсатма ыйтнă-çке. Çавна май кассаци пулатех-тĕр.

■ **О.СТОЛЯРЕНКО,**
Шупашкарти Мускав районĕн прокурорĕн аслă пулăшуçи

Владивосток ытла инçе...

Вăрмар каччин çара кайма вăхăт çитнĕ. Призывнике республикăн Канашри сбор пунктне ăсатнă. Унтан вара служба вырăнне каймалла...

Çук, каччă салтак пулса тăрайман. Вăл хăй тĕллĕнех сбор пунктĕнчен пăрахса кайнă, килне таврăннă. Çар службиn ача вăйии тейĕн! Ашшĕ йĕкĕте Канаша каялла илсе килнĕ, сбор пунктĕнче хăварнă. Лешĕ вара икĕ сехет иртсенех унтан тухса тарнă.

Çар службинчен мĕншĕн аплах хăрать? Хăй çапла хăтланнине çамрăк çын служба вырăнне Владивостока каяс килменнипе ăнлантарнă. Айван мар-и? Çакăншăн суд тенкелĕ çине ларма тивĕ, ун пирки уголовнăй ĕç пуçарнă.

■ **Н.ПЕТРОВ**

•Кăмăл-сипет

Арçын куççулĕ

Тяпук Хĕветĕрĕ Упи тăрăхĕнчи пĕр ялтан. Кăçал пилĕк теçетке çул çине пусрĕ. Мĕн пĕчĕкренех хурашурне, выççи-туттине чылай тÿснĕ. Çăкăр татăкĕшĕн кÿрше каçнине те манмасть. Ĕçчен те сăпай çитĕннĕ Хĕветĕр. Амăшĕн хÿттинче ыррине çеç вĕреннĕ.

Ялта Уках аппасемпе юнашар пурăнатчĕç вĕсем. Хĕветĕрĕн амăшĕ – чăп-чăмăр сăн-питлĕ Сухви тата Хĕветĕрĕн пĕртенпĕр шăллĕ – Ухванеç. Уках аппасем патне кÿршĕ ялти тустăванĕн хĕрĕ Марье килсе çÿретчĕ. Пĕр сăлтавсăрах ахăлтатса кулма юрататчĕ вăл. Шухă хĕр пулни куç кĕретчĕ. Хĕветĕр унран пĕрех май пăрăнатчĕ. "Юхха хĕр мана кирлĕ марах. Ĕç патне те туртăнмасть вĕт вăл", – хăй калассине амăшĕ умĕнче пытармастчĕ ывăлĕ.

Сухви кашни кунах Марье çинчен калаçрĕ. Темшĕн килĕштерчĕ ăна? Вăл çăл патне шыв ăсма тухнине карта хушăккипе сăнатчĕ. "Эх, сăн-пичĕпе те илĕртÿллĕ. Шăпах пирĕн кил-çурт валли ку", – шухăшлатчĕ хĕрарăм.

Паллах, хĕр çукки нушалантарнă Сухвие. Тата çулĕсем те сиккипех малалла вĕçтереççĕ-çке. Утмăлалла çывхарать Сухви. "Кин кĕртмеллех... Ватăлтăмăр вĕт", – çине-çинех сăмахлатчĕ хĕрарăм. Чăнах та, пулăшакан кирлех...

Вăл çине тăрсах ывăлне авлантарма шухăшларĕ. "Ытлах юхха тесе ан варала-ха эсĕ Марьене. Ав, Уках аппу епле хĕпĕртет уншăн. Çăл шывне мăшăр витрепех çĕклет. Ĕнине касăва хăвалать. Ĕнер тата ирирех анкартинчи çĕр улмине çум курăкран тасатма тухнă. Çăмăл ыйхăллă курăнать, – чунне уçнă амăшĕ. – Качча тухсан, тен, йĕркеллех пурăнса кайăр".

Авланчĕ Хĕветĕр. Тепĕр çултан ялти кивĕ çурта сутăн илсе уйрăлса тухрĕ мăшăр. Çара кайиччен çулсерен ывăл çуралчĕ Убеевсен. Салтакран таврăнсан вара хĕр пĕрчи хутшăнчĕ.

Бригадăра механизаторта ĕçлерĕ Хĕветĕр. Марье – сĕтçу ферминче, дояркăра. Вунă çул чиперех пурăнчĕç. Ака-суха вĕçленсен, трактора лартсан Хĕветĕр платнике кÿлĕнчĕ. Хуçалăхра та, уйрăм çынсем патĕнче те вăй хучĕ. Кирпĕч çурт хăпартмалла-çке унăн. Шухăшлани пурнăçланчĕ. Каярахпа хапхапа сарай та кил картине сăн кĕртрĕç. Аслă ывăлĕ авланчĕ. Хĕрĕ Шывпуçне качча тухрĕ. Юрласа, ташласа çеç пурăнмалла ĕнтĕ. Анчах та Марье фермăри хуралçăпа Сантăрпа çыхланса кайрĕ. Сантăр – ватă хусах. Марье, каççерен дежурствăра пулнă май, киле çул çухатрĕ... Пĕрпĕччĕнех кăштăртатать Хĕветĕр.

Марье ферма çуртĕнче Сантăрпа ыталашса выртать текен хыпар ялта çиçĕм пекех сарăлчĕ. "Мĕн çитмест-ши Марьене? Упăшки çав тери пултарулла арçын. Хăр-хар мар, эрех-сăраран та ют", – сăмахларĕç урамри хĕрарăмсем. Эх, шеремет Хĕветĕрĕ мĕнле тÿсетши? Кутăнла хыпар Хĕветĕрĕн хăлхине те кĕчĕ-ха. Çук, çук, чĕрине илмерĕ çав сăмахсене.

Анчах та пĕр каçхине тÿсеймерĕ, хăех "сунара" тухрĕ. Сантăрпа Марьене капкăна çаклатрĕ. Лешсем, кăштах хăюлланмалла тесе-ши, аншарли ас тивнĕ те юнашар выртнăскерсем харлаттарсах хуп турттараççĕ. Çакна асăрхасан хăйне хăй ĕненмерĕ Хĕветĕр. Унтан хаш! сывларĕ те аллине çил арманĕн çунатти евĕр лаш! сулчĕ, килнелле таплаттарчĕ.

Марье иккĕмĕш упăшка тупни çинчен систерчĕ ашшĕ ывăлне. Амăшĕ çакнашкал пăтранса çÿренине Кĕркури малтанах пĕлнĕ. Ашшĕн тунсăхлă сăмахĕсене те чĕри патне илмерĕ. Кĕркури, çилли тулса çитнĕренши, Хĕветĕре хăлха чиккинчен пĕррех шанлаттарчĕ. Унтан теппре, çине-çине... Хуларан килнĕ хĕрĕпе кĕрÿшĕ те хута кĕмерĕç. Çемье пăтраннăшăн йăлтах Хĕветĕр яваплă-мĕн. Ывăлхĕрĕн шухăшĕпе, вăл амăшне хисеплемест-мĕн. Ют арçынпа çыхланса кайнăшăн та Хĕветĕрĕнех намăс курмалла...

Амăшĕ патĕнче икĕ çĕр каçрĕ Хĕветĕр. Пĕччĕнех пурăнать ватă. Упăшки Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен аманса таврăнсан нумаях пурăнаймарĕ. Çĕре кĕчĕ Çĕпритун.

Килне каяс килмест Хĕветĕрĕн. Чунĕ çăл шывĕ пекех сивĕ. Çавах та пусран пус укçа пухса лартнă çурчĕ пуçĕнчен тухмасть. Мĕн чухлĕ тар юхтарман-ши çынсем пек пурăнассишĕн?..

Çук çав, Марье ăнланасшăнах мар... Ачисем те ашшĕн ăш пиллĕ кăмăл-туйăмне хакламаççĕ. Вĕсене тĕрĕс-тĕкел çитĕнтерессишĕн, пурнăç çулĕ çине кăларассишĕн мĕн чухлĕ çине тăман пуль. Те çав териех пăшăрханнипе, те çав териех тарăхнипе чăтаймарĕ арçын, пит çăмартисем тăрăх вĕри тумламсем шăрçаланса анчĕç. Эх, арçын куççулĕ...

■ **Георгий ТУСЛИ**

Сиплевçĕ



Çире пур хĕрарăмсене мĕн пăшăрхантарать?

Ача кĕтнĕ вăхăтра çӳçе сăрлама юрать-и?

Тухтăрсем çие юлсан малтанхи вăхăтра хĕрарăмсене çӳç сăрлама хушмаççĕ. Е сăрра палăртнă вăхăтран ытла тытмалла мар. Ӳсен-тăранран хатĕрленĕ сăрăсемпе, сиплĕ бальзамсемпе усă курмалла.

Ача пӳлĕмне сăрлама кирлĕ мар

Çире пур чухне харпăр хăй тĕллĕн юсав ĕçĕсем тумалла мар, мĕншĕн тесен мĕн пур сăрăра хими япалисем пур. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри хĕрарăмăн тата варти пепкен сывлăхне япăх витĕм кӳрет. Акă, тĕслĕхрен, этиленгликоль текен растворительпе ĕçлекен хĕрарăмăн хырăмĕ ӳкме пултарать. Çуллă сăрăсем шывпа хатĕрленисемпе танлаштарсан уйрăмах сиенлĕ.

Инсектицид хатĕрсем сиенлĕ-и?

Инсектицид хатĕрсенче сиенлĕ япаласем пур. Вĕсемпе час-часах усă курсан пепке тĕрĕс мар аталанас хăрушлăх ӳсет. Сирĕн сад пур тейĕпĕр – кунта, паллах, инсектицидсемсĕр май килмĕ. Хăрушсăрлăх мерисем çинчен манмалла мар:

1. Ача кĕтнĕ вăхăтра ӳсен-тăрана, йывăççене хими япалисемпе сирпĕтме юрамасть. Çак ĕçе мăшăрăр е çывăх тăванăр пурнăçлатăр.

2. Килти кăпшанкăсене /калăпăр, кăткăсене/ хирĕç кĕрешнĕ чухне лосьон евĕрлĕ хатĕрсемпе /спрейпа мар/ усă курмалла. Çав вăхăтра çак пӳлĕмре савăт-сапа, апат, эсир час-часах тыткалакан япаласем ан пулчăр.

Юнашар пурăнакан çынсем сигарет туртни сиенлĕ-и?

Сигарет тĕтĕмĕ çире пур хĕрарăмсемшĕн сиенлĕ. Юнашар пурăнакансем, ĕçлекенсем сигарет туртни ача аталанăвне, ӳсĕмне, виçине сиен кӳрет. Ача кĕтекен хĕрарăмăн мăшăрĕ е çывăх çыннисем пĕр хваттерте пурăннă май пĕрмаях туртсан ачан амăшĕн варĕнче пулнă йывăр чирсем, çав шутра усал шыçă та, аталанма пултараççĕ.

Саунăна çӳреме юрать-и?

Саунăна çӳренине пула варти пепке тĕрĕс мар аталанас хăрушлăх тухса тăрать.

Çак вăхăтра шăла сиплени сиенлĕ мар-и?

Шăла сиплени ачана нимĕнле сиен те кӳмĕ. Анчах та çие юлнине пĕлсен шăлсене рентгенпа тĕпчеме юрамасть.

Çире пур чухне компьютерпа ĕçлемелле-и?

Паянхи кун тĕлне компьютер çире пур хĕрарăмсене сиенлĕ витĕм кӳнине палăртман.

Хырăм ыратать...

Хырăм ыратма пуçласан çак йĕрке çинчен манма юрамасть:

1. Касса ыратать, ыратни вăйланса пырать, ырату сылтăм еннелле куçать – пĕр тăхтаса тăмасăр «васкавлă пулăшу» чĕнмелле.

2. Панкреатит /хырăм ай парĕн шыççи/ вĕрĕлсен уйрăмах хытă ыратать.

3. Аппендицит, пыршăлăхăн ерекен чирĕсем, мĕн те пулин çисе е ĕçсе наркăмăшланнă тесе шухăшлатăр тăк тухтăр киличчен нимĕн те çиме юрамасть, ыратакан вырăна сивĕ тытмалла, канлĕ выртмалла.

4. Мĕншĕн ыратнине чухлаcа илеймерĕр тĕк «васкавлă пулăшу» пырса çитиччен ыратние ирттерекен эмелсем /спазмолитиксем/ ĕçмелле мар. Çак препаратсем диагноз лартас енĕпе чăрмавсем кăларса тăратаççĕ.

5. Диагноз лартиччен хырăм çине вĕри грелка хума сĕнмеççĕ.

Тухтăр пулăшăвĕсĕрех

Самăр çынсен чи пысăк ĕмĕчĕ начарланасси теççĕ.

Кĕлетке висине чакарма рациона мĕн пур йышши купăста, çав шутра тинĕс купăстине те, çусăрлатнă турăх-кефир тавраш кĕртмелле. Вăрман улминчен сахăрсăр хатĕрленĕ компот усăллă.

Пилеш хатĕрлеме манар мар. 1 литр пилеш сĕткенне çур килограмм сахăр песукпе хутăштарса 3-5 минут пĕçермелле. Кунне 3 хут 1-ер апат кашăкĕ сĕткен ĕçмелле.

Пахча çимĕç, улма-çырла сĕтел çинчен ан таталччăр. Кашни кунах пысăках мар татăк пĕçернĕ аш çиме тăрăшмалла.

Çуллахи-кĕркуннехи тапхăрта пĕçермен апат 18-21 кун çисе пурăнма хăтланăр. Çакнашкал **меню** сĕнетпĕр:

8 сехетре – теркăпа хырнă 200-250 грамм пан улми, теркăпа хырнă 100-150 грамм кишĕр, 30-40 грамм аçтăрхан мăйăрĕ, 1 стакан шăлан çырли чейĕ.

12 сехетре – теркăпа хырнă 250-300 грамм хăяр, 50-100 грамм чие çырли, 150 грамм çусăр тăпăрчă, 1-2 стакан шăлан çырли чейĕ, 1 чей кашăкĕ пыл.

17 сехетре – теркăпа хырнă 250-300 грамм дыня, 100-150 грамм çусăр тăпăрч, 30-40 грамм курага е иçĕм çырли, 1-2 стакан шăлан çырли чейĕ.

20 сехетре – пĕр стакан турăх.

Антонина СЕРГЕЕВА хатĕрленĕ.

• Футбол

Пĕрремĕш çаврăм хыççăн

Республикăри футбол чемпионачĕн аслă дивизионĕнче ăмăртакан командăсем пĕрремĕш çаврăмри вăйăсене вĕçлерĕç. Ăмăрту лидерĕ «Шупашкар» футбол клубĕн команди, унччен ултă вăйăра умлăхыçлă çĕнтернĕскер, юлашки турта ОМОНа 3:5 шутпа выляса ячĕ. Аслă дивизионра пĕрремĕш çул ăмăртакан ОМОНра ку вăйăра Шупашкарти аслă шкулсенчен пĕрне Конгăран вĕренме килнĕ Африка футболисчĕ Сир Ангат палăрчĕ, вăл «Шупашкар» хапхине икĕ мечĕк тапса кĕртрĕ. Лидер выляса ячĕ пулин те çаврăма çĕнтерӳçĕре юлнипех вĕçлерĕ, унăн 19 очко.

Иккĕмĕш вырăна Вăрнарти «Химик-Август» йышăнать. «СК-Центр-Спартак» 2:1 шутпа парăнтарнă хыççăн унăн 18 очко.

«Йĕпреç» клубăн команди лидерпа танлашма май пурччĕ, анчах вăл килте «Динамăна» йышăнса вăййа 2:2 шутпа вĕçлерĕ те икĕ очко çухатрĕ, 17 очкопа виççĕмĕш вырăна юлчĕ. «Волга-ТАВпа» «Çĕмĕрле» Шупашкарта 2:2 шутпа выляса пĕри 16 очкопа тăваттăмĕш, тепри 14 очкопа пиллĕкмĕш вырăнсене тухрĕç.

Пĕрремĕш çаврăма Етĕрнери «Рубин» – 12, «Çĕмĕрле» – 11, ОМОН – 10, «СК-Центр-Спартак» – 6, «Чурачăк» 4 очкопа вĕçлерĕç.

Иккĕмĕш çаврăма командăсем утă уйăхĕн 31-мĕшĕнче пуçлаççĕ.

■ **В.КРЫСИН**

• Экспедици

«Археологăн çитĕнĕвĕ ăнăçуран килет»

Нумаях пулмасть ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин сайтĕнче Чăваш наци музейĕн археологĕсем металл шăратмалли вучах /горн/ тупни çинчен вуласа пĕлтĕмĕр. Çак кунсенче археологсем экспедицирен таврăнчĕç. Вăл епле иртни пирки каласа пама Дмитрий Спрыжковран ыйтрăмăр.

– Дмитрий Валерьевич, ĕçхĕл мĕнлерех йĕркеленчĕ?

– Чăваш наци музейĕ тăваттăмĕш çул экспедици иртерет. Эпĕ тăваттăмĕш çул усă хут илетĕп. Усă хут вăл – кирек епле археологи тĕпчевĕ йĕркелеме ирĕк паракан ятарлă документ. Кăçал ăна Чăваш Енри археологсенчен эпĕ кăна илнĕ.

• Дмитрий Спрыжков.

Экспедицисене Чăваш наци музейĕнчен 4 çын хутшăнать. Çавăн пекех пире волонтерсем пулăшаççĕ. Вĕсем авалхи историпе кăсăкланакан, тĕрлĕ профессиллĕ çынсем.

Кăçал Муркаш районне кĕрекен Ильинка çывăхĕнче, Атăл хĕрринче ĕçлерĕмĕр. Тимĕр шăратнă вучах /горн/ чавса кăлартăмăр. Ăна 2008 çултах, вырăна тĕпченĕ чухнех асăрханăччĕ. Ас тăватăпха, ун чухне çурла уйăхĕччĕ. Çумăр вăйлă çурĕ. Çыранăн пĕр пайĕ ишĕлсе анчĕ те эпир хăйне евĕр çак кăмакана асăрхарăмăр. Чавма, тасатма пуçларăмăр. Кĕçех чул – вĕркĕч курăнчĕ... Шел, 2009 çулта çак вырăнта шырав ирттерме ирĕк паракан усă хута илеймерĕмĕр. Пĕлтĕр Йĕпреç районĕнче шырав ĕçĕсенче пултăмăр. Кăçал кăна çӳлерех асăннă вучах патне таврăнтăмăр.



• Тимĕр шăратмалли вучах.

– Дмитрий Валерьевич, мĕнле шухăшлатăр, çынсем кунта миçемĕш ĕмĕрте тимĕр шăратма пултарнă?

– Çирĕплетекен материал, керамика тупаймарăмăр эпир. Ку тăрăхри çынсем авал мĕн ĕçлесе пурăннипе интереслентĕмĕр. Тимĕр шăратни пирки асăннине ниçта та тĕл пулмарăмăр. Пулă тытса, сутса пурăнни пирки калани пур. Пирĕн шухăшпа, çакнашкал вучахсемпе вăтам ĕмĕрсенче усă курнă. Мĕнле халăх пурăннă унта? Чăвашсем-и, вырăссем-и, Атăлçи пăлхарсем-и е финн-угорсем-и – материалсем çукран çирĕплетсе калама çук. Апла пулин те Чăваш Ен территорийĕнче хамăр патăмăрти шурлăхри тимĕр тăпринчен тимĕр шăратни пирки татăклăнах калатпăр.

– Тимĕр шăратакан кăмака пирки тĕплĕнрех каласа парсамăр?

– Питĕ интереслĕ вучах вăл, унăн конструкцийĕ те хăйне евĕр. Ăна çĕр ăшне чавса тунă. Унта шăпах мергель /извеçлĕ чул/ тăмĕ пур. Вырăнне питĕ меллĕ суйласа илнĕ. 3,5 метр диаметрлă, 3 метр тарăнăш шăтăк чавнă. Чул-вĕркĕч меллештернĕ. Ăна çурçĕр еннелле пăхтарнă. Мĕншĕн тесен ку вырăнта çурçĕр енчен çил тăтăш вĕрет. Вăл вара пĕрешкел температура /1000 градусран ытларах/ тытса тăма пулăшнă. Çил лайăх вĕрнĕ чухне вучах 2-3 кун ĕçленĕ. Вучах шăтăкне тимĕр тăприпе кăмрăка сийĕн-сийĕн хурса тултарнă. Çиелтен вĕрлĕксемпе пĕренесем хурса тăрă хăтланă. Ăна тăмпа лайăх сĕрсе хунă. Тĕтĕм тухма шăтăк хăварнă. Унтан вучаха чĕртнĕ. Кăмрăкĕ çуннă, тимĕр тăпри ирĕлнĕ, кăмрăк çунчăкĕ ятарласа хăварнă шăтăкран юхса тухнă. Сийлĕ-сийлĕ кукăль евĕр кăмака çуннăçемĕн пĕчĕкленсе, лăпчăнса пынă. Тимĕрĕ вучах айĕнче чашăк евĕр вырăнта пухăннă. Эпир ăна чавса тупрăмăр. Кăмака 2-3 кун ĕçленĕ хыççăн 2-3 кун сивĕннĕ. Вăл вăхăтра ун тăррине пăснă, вучахне тасатнă. Металне /катрашка тимĕрне/ тимĕрçĕ лаççине ĕç хатĕрĕ е хĕç-пăшал тума ăсатнă. Икĕ тонна тимĕр тăпринчен 20-25 процент тимĕр шăратнă.

Çакнашкал вучахпа 2-3 хутран ытла усă курман. Эпир чавса кăларнă кăмакаран тимĕрне кăларса илнĕ те çаплипех хăварнă. Мĕншĕн тесен мергель тăмĕ пысăк температура хыççăн тĕпренме пуçлать. Çавăнпа кивĕ вучаха хута яриччен çĕнĕ кăмака тума çăмăлрах.

Тимĕр тăприне Атăлăн ку енчен те /унта шурлăхсем пулнă/, тепĕр енчен те /унта торфлă вырăнсем/ илме пултарнă. Пирĕн шухăшпа – тимĕр шăратакансем кунтан инçех мар – ӳплере е çĕр пӳртре пурăннă. 2008 çулта ӳпле евĕр япала тупма май килнĕччĕ. Кăçал вара вучахпа аппаланса вĕсене шырама вăхăт юлмарĕ.

Тимĕр шăратмалли вучах та, ахăртнех, пĕрре кăна мар. Ытти вучаха тупсан кунта металлурги комплексĕ вырнаçнă тесе калама та пулать.

– Пĕлтĕрхи экспедицисем пирки те пĕлес килет.

– 2009 çул экспедицирен уйрăмах пуян пулчĕ. Çармăс археологĕсем Йошкар-Олана Цареград кремльне чавнă çĕре чĕнчĕç.

Етĕрне районĕнчи Йăвански /Иваньково/ масарĕнче шырав ĕçĕсем ирттертĕмĕр. Çавăн пекех Шупашкарти авалхи вырăна /Çеçпĕл урамĕнче/ чавнă çĕре хутшăнтăмăр. Асăннă экспедицин тĕп тĕллевĕ Шупашкар кремлĕн стенисене тупса палăртассиччĕ. XVIII ĕмĕр вĕçнелле кунта кремль пулнине çирĕплетекен лайăх материал тупрăмăр. Вăл вăхăт тĕлне кремль стенисем пулман ĕнтĕ. XVIII ĕмĕр пуçламăшĕнче çуннă вăл.

– Малашнехи тĕллевсем, ĕмĕтсем...

– Атăл тăрăхĕнче чăнласах металлурги комплексĕ пулнине çирĕплетесчĕ, ытти вучаха тупасчĕ. Çурма çулта чарăнса тăрас марччĕ. Археологăн çитĕнĕвĕ ăнăçуран ытларах килет.

■ **Роза ВЛАСОВА**

Кĕскен

• Дмитрий Валерьевич Спрыжков Шупашкарта çуралнă.

• И.Я.Яковлев ячĕллĕ педуниверситетăн истори факультетне, Мари Республикин патшалăх университечĕн аспирантурине /«археологи» специальноçпа/ пĕтернĕ.

• 2006 çултанпа – Чăваш наци музейĕн наука сотрудникĕ.

• 30 çулта.

• Çăмăл атлетика

Барселонăран ырă хыпарсем кĕтетпĕр

Испанири Барселона хулинче паян Европăри çăмăл атлетсен чемпионачĕ пуçланать. Континентри спорт календарĕнче вăл – 1934 çултанпа. Паллах, пирвайхи старта пысăк йышпах тухман. Малтанхи чемпионата 23 çĕр-шыври 232 çăмăл атлет кăна хутшăннă. Ку хисеп çултан çул ӳссе пычĕ. Сăмахран, 2002 çулхи чемпионатра 47 çĕр-шыври 1470 спортсмен ăмăртнă. Çав шутра чăвашсем те пулнă: 20 километра утассипе Олимпиада Иванова пĕрремĕш вырăн йышăннă, Елена Николаевăпа Владимир Андреев кĕмĕл медале тивĕçнĕ.

Европăн ытти чемпионачĕнче те пирĕн ентешсем çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командин чысне тивĕçлипе хӳтĕленĕ. Чи малтан СССР спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕн Ардалион Игнатьевăн ятне асăнмалла. Пултаруллă спринтер 1954 çулхи чемпионатра /Швейцари, Берн/ 400 метра чупассипе финалта пурне те кая хăварнă, СССР рекордне те çĕнетнĕ – 46,6 çеккунт. Вăлах 200 метрлă дистанцие иккĕмĕш чупса тухнă.

Елчĕк каччи Европăра пысăк çитĕнӳ тунă çул Çĕрпӳ районĕнчи Çатра ялĕнче Гиана Романова çуралнă. Мĕншĕн аса илтĕмĕр-ха эпир çак ята? Спорт çулĕпе ăнăçлă утса пырса вăл та Европа чемпионĕн ятне çĕнсе илме мехел çитернĕ: 1978 çулта Прагăра 1500 метрлă дистанцире Гиана пĕрремĕш вырăн йышăннă. Романовăн кăтартăвĕ /3 минут та 59 çеккунт/ Игнатьевăнни пекех – халĕ те республика рекорчĕ. Тĕлĕнтермĕш мар-и ку?

Хисеп пьедесталĕ çинче 2006 çулта эпир Татьяна Петровăна куртăмăр. Вăл ун чухне 3000 метра чăрмавсем урлă чупассипе иккĕмĕш вырăн йышăннăччĕ. Хальхинче, Барселонăра, çак дистанцирех Красноармейски районĕнчи Яманакра 1987 çулта çуралнă Людмила Кузьмина яваплă экзамен тытать. Чемпионата хутшăнма вăл Раççей чемпионатĕнче иккĕмĕш вырăн йышăнсан тивĕçлĕ пулчĕ. Кăçалхи чемпионата çавăн пекех Вера Соколова хăвăрт утакан, Сильвия Скворцова марафонка хутшăнаççĕ. Чăваш марафонкисем Европа шайĕнче ытти çулта та тупăшнă. Югославири Сплит хулинчен Валентина Егорова 1990 çулта кĕмĕл медальпе таврăннăччĕ. Тепĕр икĕ çултан Михаил Кузнецов тренерăн вĕренекенĕ Барселонăра Олимп чемпионĕн хисеплĕ ятне тивĕçнĕччĕ.

Вулакансене пĕлтеретпĕр: хĕрарăмсем Барселонăра утă уйăхĕн 31-мĕшĕнче марафон чупаççĕ, ыранах Вера Соколовăпа Людмила Кузьмина çивĕч кĕрешӳве хутшăнĕç.

■ **Юрий ПЛОТНИКОВ**

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

ООО "КОМБИНАТ СТРОИТЕЛЬНЫХ МАТЕРИАЛОВ"

от производителя

Фундаментные БЛОКИ ФБС24 3.4.5.6 от 1200 руб.
КОЛЬЦА КОЛОДЕЗНЫЕ 1500 руб.
ПЕРЕМЫЧКИ оконные от 95 руб.
БЛОКИ керамзитобетонные пропаренные от 17 руб. /20х20х40, 12х20х40, 9х12х40 см/
СЕТКА кладочная от 22 руб. за 1 м. Сертифицировано.
СТОЛБЫ железобетонные длиной 2,0 – 3,0 м от 300 руб.
БОРДЮРНЫЕ КАМНИ, ТРОТУАРНЫЕ ПЛИТЫ от 150 руб;
ПОДКРАНОВЫЕ БАЛКИ для башенных кранов.

возможна доставка

Телефоны: 63-79-28, 63-73-73, 67-73-73.

ПРОДАЮ

2.Предлагаем по фабричным ценам в рассрочку: стенки, прихожие, спальни, шкафы, комоды, кровати, матрацы в магазине "Балахнинская мебель". Сборка, доставка. А.: Чеб., Гагарина, 11 /напротив Русского драмтеатра/. Тел. **56-41-21.** Сертифицировано.

12.Оцинковку рул., листовую от 0,5 до 2мм, профнастил оцинкованный, крашеный, комплектующие для кровли. Доставка – бесплатно. Тел. 44-44-33.

15.Керамблоки качеств-ые, **цемент.** Дешево. Т. 89033587772.

18.Сетку-рабицу от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

25.Гравмассу, керамблок, песок, кирпич силикатный, **торф.** Доставка. Т. 89023277585.

54.ПИЛОМАТЕРИАЛЫ: обрезной от 4000 руб. за куб., брус индивидуального сечения, необрезной /25-50 мм/, вагонка, шпунтованная /половая/ доска, наличники и плинтуса, материал – хвоя. НДС выделяем. **Работаем без вых.** А.: Чеб., ул.Альгешевская, 18А /рядом с ТД «Георгий», ост. «пос.Альгешево»/, тел. **44-33-25.** *Эпир хамăр клиентсене юрататпăр!*

55.МЕТАЛЛОЧЕРЕПИЦУ. Сайдинг /импортное производство/. Цемент. Оптом и в розницу. Т. 44-33-25.

57. Гравмассу, щебень, **песок, керамзит, торф с доставкой** до 30 тн за рейс. **Недорого.** Т.: 387015, 89276687015.

222.Гравмассу, песок, **щебень,** торф, кирпичн. бой, **керамблок** от производителя. Т. 89051990122.

294.Сетку-рабицу. Скидки. Доставка. Т. 89279973144.

300.Цемент М-400 в мешках оптом и в розницу, **гравмассу, песок.** Доставка. Т.: 89278497674, 89278497675.

327.Гравмассу, песок. Дешево. Доставка. Т. 89030666630.

341.Брусчатку, плитку тротуарную, **бордюры.** Т.89033587772.

399.Песок, гравмассу, торф, чернозем, **керамзит, щебень.** Доставка до 15 тн. Т. 89053420166.

459.Гравмассу, песок с доставкой. Т.: 89063821888, 379388.

470.МЕТАЛЛОЧЕРЕПИЦУ, профнастил, оцинковку, водосточные системы. Дешево. Доставка. Выезд на замер. Т. 89053445186.

494.ОПГС, песок, гравмассу, щебень. Доставка до 15т. Т. 89176769379.

496.СОЛОМУ в рулонах /Цивильск/. Опт. Розница. Самовывоз. Тел. 89278649808.

УСЛУГИ

58.Лечение алкоголизма, табакокурения ежедневно с 9 час., в субботу – без записи. Обр.: Чеб., Энгельса, 2. Т. **621184.** Лиц. 2101000170 МЗ ЧР. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

421.Ремонт TV, DVD. Т. 387723.

461.Анонимное лечение алкогольной зависимости. А.: Чебоксары, пр. Ленина, 32А. Т. 551725, 670817, 551660, 501364. Лиц. Росздравнадзора ФС 21-01-000353 от 05.03.2010г. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

• Пурнăç кăлтăрмачĕ

Пуррине пĕтерес марччĕ, çуккине – пур тăвасчĕ...

Шупашкарти "Колхоз пасарĕ" текен чарăнура троллейбуса чипер тумланнă, çутă сăн-питлĕ, кăштах сăра-эрех ĕçни палăракан яштака арçын кĕчĕ. Аллинче – самай пысăк сумка. Чăвашла: "Вакки çук-ха манăн, çакă çеç, ваклаятăр пуль?" – тесе кондуктора 500 тенкĕлĕх укçа тăсса пачĕ.

– Сан пеккисем "укçа çук" тесе юптарма тытăнаççĕ те пĕр-ик чарăнуран анса юлаççĕ. Анчах укçине эрех ĕçмелĕх таçтан тупаççĕ. Панă чухне илес хăвăртрах, – терĕ салон хуçи.

– Кондуктор юлташ, аплах ан намăслантарăр-ха. Вахтăпа ĕçленĕ çĕртен пĕр-ик сехет пек каялла çеç Шупашкара çитрĕмĕр. Пасарти столовăй-кафене кĕрсе çавна кăштах палăртрăмăр, çавă çеç, – тесе пушă вырăна кусса тăчĕ палламан арçын.

Кăмăллă çынна ыйту памасăр чăтаймарăм.

– Тюмень облаçĕнче, Сургут хули тăрăхĕнче ĕç тупнă та çавăнта çӳретпĕр, – пулчĕ хурав. – Пĕр уйăх çурă – унта, çавăн чухлех – килте пурăнатпăр. Арăм – Мускавра. Тепĕр икĕ эрнерен таврăнмалла. Вăл та тĕп хуламăра пĕр уйăх ĕçлесе пĕр уйăх килте канмалла кайса çӳрет. Ватă çынсен çуртĕнче санитаркăра ĕçлет.

– Ача-пăча çук пуль-ха сирĕн? Вĕсем...

– Асли, хĕр ача, виççĕмĕш класра вĕренет. Кĕçĕнни – ывăл, кăçал шкула каймалла. Вĕсене хуняма икĕ эрне пăхрĕ ĕнтĕ. Паян ирех шăнкăравларĕ кĕсье телефонĕпе. Хунеçе йăвашланчĕ, вăл та яла васкать.

– Капла çемьĕр арканасран хăрамастăр-и? Пĕри – унта, тепри кунта тупсан...

– Маншăн хамăн ачамăрсем пек хакли çук. Арăм та çаплах шухăшлать. Хальлĕхе пĕр-пĕрне шанатпăр.

"Çĕр çинче çĕр чăх та пулĕ, пирĕн хамăрăн та вуннă та", – тетчĕ пулса çитмен пĕр-пĕр ĕç пирки кӳршĕри Кĕркури мучи. Халĕ пур çĕрте те лайăххи пирки хытă шавлатпăр. Анчах ĕçре шутланакан çынсем те 3-4 уйăх шалу илмен тата пурăнакан тăрăхра ĕççĕр тăрса юлнă çын сахал марри пирки пачах манатпăр. Шупашкарти агрегат завочĕ, сăмахран, ку таранччен тухăçлă ĕçленĕ, рабочисене вăхăтра тӳлесе тăнă, хваттерсемпе те тивĕçтернĕскер çуркунне темиçе уйăх "типĕ" тыттарнă. Малтанхи уйăхсенче панă виçĕ пин тенкĕпе, сăмахран, икĕ ачаллă – пĕри шкула çӳрет, çемьене мĕнле усрамалла?

Е иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче Шупашкарта йĕркеленнĕ 1213-мĕш автоколонна 1941-1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче фронта та, халăх хуçалăхне те пысăк пулăшу панă. Асăннă ĕмĕрĕн 50-80-мĕш çулĕсенче çак хастар йыш вăрçăпа юхăннă тăван халăх хуçалăхне ура çине тăратма-аталантарма, çав шутра ытти региона та, пулăшнă. Халĕ, хăй вăхăтĕнче пин çурă ытла çынран иртнĕ йыш арканса-саланса пĕтрĕ тесен те йăнăш мар. Автомашинисене – сутса, çыннисене ĕçрен кăларса ярса пĕтерчĕç. Сутса пĕтерейммен юлашки автомашинăсене пăхса тăракансем çеç халь кунта.

...Тăван тăрăхра ĕçлесчĕ-пурăнасчĕ, ачана ашшĕ-амăшĕн ăшшине, тĕрĕс воспитани парасчĕ, çирĕп сывлăхлă та çепĕç кăмăлтуйăмлă ӳстересчĕ. Çук вĕт. Пепкисене хăварса ирĕксĕрех "чул касма" каймалла...

■ **Ĕлексей ШУРККИ.**
Шупашкар хули

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР

УЧРЕДИТЕЛЬ – "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" РЕСПУБЛИКА ПАТШАЛĂХ УЧРЕЖДЕНИЙĔ
Раççей Федерацийĕн Пичет комитетĕнче 1996 çулхи раштавăн 19-мĕшĕнче 015525 №-пе регистрациленĕ.
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515,
"Хыпар"-шăмат кун" – 78353, "Сывлăх" – 11524,
"Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Тĕп редактор çумĕ, шеф-редактор Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ, коммерци директорĕ/
Т.В.ИЛЬИНА /яваплă секретарь/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ /тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ, шеф-редактор/
А.Х.ЛУКИЯНОВА, Н.Г.СМИРНОВА
Дежурнăй редактор Р.А.ВЛАСОВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – тĕп редактор,
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ, шеф-редактор,
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ, коммерци директорĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь,
28-85-87 – яваплă секретарь çумĕ,
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ,
56-05-21, 56-22-31 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ,
56-08-62 – экономика пайĕ,
56-22-31, 56-03-04, 28-85-33 – социаллă пурнăçпа вĕрентӳ пайĕ,
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ,
56-04-26 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ,
28-82-91 – корректорсем, 56-45-94 – фотокорреспондент,
бухгалтери – 28-83-64,
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ,
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ,
hypar2008@rambler.ru
корр. пункчĕсем:
/8-835-51/ 2-12-90 – Хĕрлĕ Чутай, /8-835-32/ 6-11-82 – Патăрьел,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç,
/8-835-71/ – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07.
Электрон почти:
pop408@rambler.ru
hypar@chtts.ru
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» РПУ компьютер центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел.: 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене параканçем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Кӳметентлă" рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7217. Заказ 2223.